28-94
КНИГОХРАНИЛИЩЕ
327
с

Т. Ҫ. ҪЕМЕНӐВ

# СОВЕТ СОЙУСНЕ ТӐШМАНСЕНҪЕН СЫХЛАМА ХАТӖР ПУЛ!



Ӗҫлекен мӑлатукӗ, хресчен акапуҫӗ, хӗрлӗ салтак винттовкки — тӗнчери никам ҫӗнтерейми вӑйла сойус.

ШУПАШКАР—1928

327 | 22762
С-2 | Семенӑв Т. С.
Совет союзне тӑшмансенчен сыхлама хатӗр пуля.
1927 г.

№ ..........

**Берегите книгу**

Не перегибайте книгу во время чтения
Не загибайте углов
Не делайте надписей на книге
Не смачивайте пальцев слюною перелистывая книгу
**Завертывайте книгу в бумагу.**

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

327
ç 2.

Т. Ç. ÇЕМЕНĂВ

# СОВЕТ СОЙУСНЕ ТĂШМАНСЕНЂЕН СЫХЛАМА ХАТĔР ПУЛ!

22762

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар 1927 ç.

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Чувашская, 6

Чувашлит № 2260 Напечат. 3000 экз.

## Кăпиталиссем вăрçа хатĕрленеççĕ.

Тĕнђе вăрçинђи тупă - пăшал сассисем йулашки хут йантранă хыççăн 10 çул та иртменха. Вăрçă амантса хăварнă çынсен йухан-суранĕсем халĕ тӳрленсе çитмен, кашни патшалăхрах ĕçхалăх çемйисенђи ашшĕсем, тăванĕсем вăрçăра вилни, уксак - ђăлах пулса йулнисем асран кайса çитмен. Анђах кăпиталиссем рапођђисемпе хресђенсем çине çĕнĕ вăрçăпа йăтăнса анма хатĕрленеççĕ.

Влатимĕр Илйиђ Ленин, краштăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн, килĕшӳ вăхăђĕ çитнине кура нумайах хĕпĕртемелли çук, тесе вĕрентеђђĕ.

Краштăн вăрçи хыççăнхи вăхăта вăл килĕшӳ вăхăђĕ, темен, сывлăш çавăрса илмелли вăхăт, канмалли вăхăт, тенĕ. Çав вăхăт хăçанђђен пырассине те вăл тĕлли-паллипех кăтартса паман, вăл вăхăт пролеттариат тиктаттурин патшалăхĕпе кăпиталисăм тĕнђи

хушшинђи хěçпăшаллă çапăçу вăхăтлăха ђаръннине пěлтерет, анђах пролеттари патшалăхěпе кăпиталисăм тěнђи хушшинђи кěрешў хěçпăшаллă çапăçусăр пуçне урăх майсемпе те ěлěк те пынă, халě те пырат, тенě вăл. Кăпиталиссене çěнтернě пролеттарисен патшалăхěпе темиçе мěлйунлă пролеттарисене тата тěрлě колоњисенђи халăхсене пусмăрласа пурăнакан патшалăхсем хушшинђе нимěнле килěшў те пулма пултараймасť. Сотсиалисăм тăвакан тěнђепе ишěлсе пыракан кăпиталисăмăн пěр ђěлхе, пěр килěшў пулман та, пулас та çук.

Канмалли вăхăт тени вăл—епěр халě хамăр тăшмана—империалисăмпа кăпиталисăма—çěр çумне çавăрса çапса имěрсе пăрахмалăхах вăйлăланайманнине пěлтерет; ăна тума тěнђери пролеттариатăн вăй çитейместха; кăпиталиссен суйисем ђылай рапођђисен пуçěсене минтретсе усраççě. Анђах, тепěр йенђен пăхсан, пирěн Совет респуплěкě пулса кайсанах пире тěрлěрен танккăсемпе, йеропланссемпе тапăнса курнă тăшман, тепěр хут халех тапăнса, пире пěтерсе хума вăй çитерейместь. Пěтěм çěрěн ултă пайěнђен

пĕр пайĕ çинђе влаç ĕçхалăх аллине куçнипе империалиссен ирĕксĕрех килĕшес пулаť. Епĕр кăпиталиссене таптаса лапђăтма вăй çитерейместпĕр пулсан, вĕсен те пире пăвса пăрахмаллăх вăйĕ çук. Вăл ĕçе вĕсем пĕрре пуçăнса та пăхрĕç. Вĕсем пире малтан хĕç-пăшаллă çарсемпе тапăнса пăвса пăрахас-шăнђђĕ, анђах пултараймарĕç. Кайран вĕсем пире пĕлмĕш пулђĕç—çĕрĕн ултă пайĕнђен пĕр пайĕ çинђе çынсем хăйсем тĕллĕн, хăйсене кирлĕ пек пурăнаççĕ те, анђах епĕр вĕсене асăрхамастпăр, вĕсене епĕр йăшăн-мастпăр, пирĕнсĕр вĕсем пурăнма пултарай-маççĕ, теђђĕç кăпиталиссем. Сăмахпа вĕсем тем те калама пултарĕç те, анђах ĕçре вăл апла пулмасť: економĕккă йенђен пăхсан, çĕрĕн ултă пайĕнђен пĕр пайне пирĕн пат-шалăх пĕђђенех йышăнса тăнине, унăн аллинђе мĕнле пуйанлăхсем пуррине шута илсен, ăна асăрхамасăр пурăнма никам та пултараймасť.

Кăпитал вăл усламсăр, сутуилӳ тумасăр пурăнма пултараймасť. Услам хыççăн кайса, уншăн антăхса, кăпиталиссем хăйсен пиђĕ-сене кĕççе витсе çĕлеме те хатĕр, вĕсем

уншăн тем тĕрлĕ ирсĕр ĕç тума та, ђунĕсене шуйттана сутма та хатĕр.

Çав усламшăн, тупăшшăн антăхнă пиркийех вĕсен, хăйсем пире шутсăрах кураймаççĕ пулин те, Советсен респуплĕкне йышăнмалла пулђĕ. Сутуилў тăвасах пулаť, сутăнман ытлашши таварсем нумай, анђах рынăксем сахал; Респуплĕксен Сойусне таварсем кирлĕ, вăл вĕсемшĕн лайăх хак параť, вăхăтра тўллет. Полђшевиксем кăпиталиссемшĕн усал çынсем пулђђăр ĕнтĕ хуť, анђах кăпиталиссен сутуилў тăвасах килет, нимрен ытла услам нумайрах илни паха. Акă ĕнťĕ мĕн хушрĕ пире курайман кăпиталиссене пирĕн патшалăха йышăнма.

Анђах вĕсем пире ырă шухăшпа йышăнђĕçши? Çук. Вĕсем, миçе каласан та, çав тупăшшăн, усламшăн антăхса анђах пире йышăнђĕç. Краштăн вăрçи пĕтнĕ хыççăнхи вăхăт вăл сывлăш çавăрмалли, канмалли вăхăт пулнă, халĕ ťе çавăн пекех, вăл вăхăт халĕ те кăпиталисăм тĕнђипе Совет Сойусĕ хушшинђи хĕçпăшаллă вăрçă пĕтнĕ вăхăт анђах. Халĕ ĕнтĕ пирĕн патшалăх çĕнĕ, урăх тĕрлĕ вăхăта кĕрсе кайрĕ, вăл вăхăта сывлăш

çавăрмалли, канмалли вăхăт пĕтессин пуç-
ламăшĕ теме пулаť.

**Тĕнђери пуршуаçи Совет Сойусне хирĕç тă-
малли майсем шыраť.**

Иртнĕ уйăхсенђе пулнă ĕçсем пулас вăр-
çăран сыхланмалли çинђен пире ирĕксĕрех
шухăшлаттараççĕ. Сыхланасси анђах та мар:
пирĕн тăшмансен акĕнђĕсем пире вăрттăн
тапăна та пуçларĕç, вĕсене пирĕн пусарас
пулаť.

Тăшман пирĕн çинђен тĕрлĕ елексем
сарса, пире вăрçă пуçлаттарасшăн. Епĕр вăр-
çасшăн маррине, вăрçăран пăрăнасшăн пулса
епĕр пит ђăтăмлине тăшман пит лайăх пĕлсе
тăраť.

Çавна пĕле тăркађах тăшман пире тата
хытăрах йĕкĕлтеме тытăнђĕ, тĕрлĕ йенђен
мăшкăлама пуçларĕ.

Тшан-Тсо-Лин Пеккĕнри пирĕн поссолђ-
ствăна тапăнни, Шанхайри пирĕн консуђства
çавăрса илни, Анклин намăссăр ыйтăвĕсем,
ултавĕсем, Лонтăнри пирĕн сутуилӳ тăвакан
претставиттĕлствăна тапăнни, тата тĕнђери

пуршуаçин акĕнђĕсем пирĕн патшалăхра пысăк хапрăк-савăтсене, електритсă стантсисене тĕртсе çунтарса, йе сиктертсе йама хăтланса çӳренисем—çавсем вĕсем пурте тăшман пирĕнпе вăрçма хатĕрленнине пĕлтереççĕ. Анкли правиттĕлстви пирĕнпе килĕшӳ ђĕлхипе каласма пăрахнине илсен – вăл йапала вăрçă пуçлас йенне тунă утăм пулаť.

Ун çинђен кашни рапођђин, кашни хресђенĕн, кашни хĕрарăмăн пĕлсе тăрас пулаť.

Анкли правиттĕлстви пирĕн патшалăхпа килĕшӳллĕ пурăнас ĕçе пăрахăça кăларнă хыççăнах, Пољшăра пурăнакан пĕр вырăс шурăквартейтсă пирĕн Пољшăри поссола Войккăв йулташа персе вĕлерни—вăл вăрçă самани çитессе пĕлтерет. Çак çӳлте асăннă тискер ĕçсем вĕсем пурте Анкли аллипе пулса пынă.

Мĕншĕн Анкли аллипе? Акĕ мĕншĕн. Пĕтĕм тĕнђери пуршуаçипе Анкли пуршуаçийĕ сотсиалисăмлă пурнăç тăвакан Совет патшалăхне курайманни Анклирен килет. Совет çĕршывне Анкли пусмăрлăхĕ айĕнђе пурнакан тĕрлĕ халăхсем пит йуратаççĕ. Совет Сойусĕ вăйлăланса пыни, вăл рапођђи класпа

хресђен халăхне пусмăрлама мар, ăна пур йенђен те пулăшса, сотсиалисăм çулĕпе илсе пыни Анкли пусмăрĕ айĕнђе пурăнакан халăхсене шутсăрах кăмăла килет. Кăпиталисăм пĕтĕм тĕнђипех майĕпе шăтăкланса ишĕлсе пынă вăхăтра, халĕ Анкли кăпиталисăмĕ шутсăрах йăвăр саманара пурăнаť. Анклин колоњийĕсем, нимрен ытла Киттай Анкли аллинђен тухасшăн тăрăшаççĕ. Епĕр хамăр патшалăхра revoљутси туса кăпиталиссемпе помешђĕксенђен влаçе туртса илсе, сотсиалисăмлă пурнăç тума пуçларăмăр. Анкли пусмăрĕ айĕнђе пурăнаќансем те çавăн пек revoљутси тăвасшăн. Ку йапала Анкли патшалăхĕшĕн пит пысăк „хĕнхур“ пекех пулаť. Илер Киттайа. Вăл Анклин çурколоњи хисепĕнђе тăраť. Унта revoљутси пулсан, Анклин усламĕсем, тупăшĕсем сахалланаççĕ. Киттайри revoљутси, тем ђул йăвăр çулпа пыраť пулсан та, ăна пĕтерме тăрăшакансем нумай пулсан та, вăл вăйсăр мар, унăн вăйĕ ўссех пыраť. Çавăнпа та Киттайри revoљутси хăйпе йунашар Интире те revoљутси пуçласа йама пултараť. Инти вăл пит пуйан çĕршыв, унта

300 мĕлйун çын Анкли кăпиталисăмĕ пусмăрлăхĕ айĕнђе асапланса пурăнаŤ. Çав пуйан Интире револђутси пулни—Анкли патшалăхĕ пĕтсе ларасса пĕлтерет.

Акă ĕнтĕ ăçтан тухса тăраŤ Анкли кăпиталисĕсем пирĕн Совет Сойусне урнă пек курайманни. Мĕншĕнха Анкли кăпиталисĕсем пире хирĕç çак йулашки вăхăтра анђах тăра пуçларĕç? Виçтăват çул маларах мĕншĕн пуçăнайманха вĕсем вăл ĕçе? Акă мĕншĕн. Анкли кăпиталисĕсем 1917—21-мĕш çулсенђе пире хирĕç хĕçпăшалпа вăрçса ĕçе ăнтараймарĕç, унтан вара краштăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн, епĕр хамăр патшалăхри хуçайства ура çине тăратма хамăр тĕллĕнех пултарайас çук, тесе ĕмĕтленсе тăђĕç, унтан тата йусанса çитнĕ хуçайства малалла сотсиалисăм çулĕпе йарайас çук, тесе вĕсем пушшех хытă хĕпĕртеђђĕç. Вĕсем пире 1922-мĕш çулхи выççăхра та, кайранхи çулсенђи нумай пулнă тырă-пулла ниçта сутма аптăранипе те, тĕрлĕрен инкек-синкексем çитсен те вĕлерессĕнехђĕ.

Анђах епĕр вилмерĕмĕр, пурăнатпăр, пирĕн патшалăх вăйлăлансах пыраŤ. Анкли

кăпиталисĕсен ĕмĕђĕ çитмерĕ. Пирĕн хуçайства мĕнле ӳссе вăйлăланса пынине вĕсем катаран пирĕнтен те лайăхрах курăççĕ. Çавăнпа та вĕсем пире çĕнĕрен хĕçпăшалпа тапăнасшăн. Вĕсем пире вăрçăпа тапăнни Совет Сойусне пĕтерейменсен те, унăн йалхуçайствипе промышлĕннăçĕ малалла кайассине ђарса тăма пултараť.

Акă ĕнтĕ Анклин шухăшĕсем.

**Пирĕнпе йунашар патшалăхсем те вăрçа хатĕрленеççĕ. Анкли вĕсене пулăшаť.**

Йулашки çулсенђе хĕвеланăçĕнђи пирĕнпе йунашар патшалăхсем вăрçа хатĕрленни мĕнрен паллàши?

Çак ыйтува хирĕç тавăрса калађђен малтан пирĕнпе йунашар патшалăхсен екկономĕкне пĕлес пулаť. Çав патшалăхсене кашнине ăраснан пăхса тухсан, вĕсен патша вăрçи хыççăн промышлĕннăçĕ хавшани, ура çине тăрайманни, çавăн пирки вĕсем вăйлă патшалăхсене пăхăнса тăни курăнаť. Вĕсене (Пољшăна, Румыђине, Финљантине, Латвине, Естођине) вăйлă патшалăхсем пулăшса тăмасан, вĕсем пĕри те нумайђђен пурăнма

пултараймаççĕ. Поҍшă хуçайстви Франтсипе Амерĕк панă сайомсем пирки анҍах хăпарса пырать. Сайомсем (кивçен укçа) паракан патшалăхсем вĕсем вĕсене вăрçа хатĕрленме мар, хуçайствăна хăпартма паратпăр, теççĕ.

Амерĕк ĕнтĕ хуть ĕлĕкхи вăйлă промышлĕннăçлă Поҍшăран çĕрĕçлекен патшалăх тăвасшăн. Кăпиталисăмлă патшалăхшăн вăл пит усăллă, мĕншĕн тесен вăйлă промышлĕннăçлă патшалăхсем хăйсен промышлĕннăç таварĕсене сутмалли çĕнĕ рынăксем тупаççĕ.

Пирĕнпе йунашар патшалăхсен промышлĕннăçне хăпартас ĕçшĕн пуринҍен ытла Анкли нумай укçа панă. Румыңҍири нефтă кăларас ĕçĕн çурри—50%—Анкли аллинҍе. Анкли Румыңҍири нефтăшăн пит çунать. Çавăншăнах вăл Румыңҍине вăрçă йенҍен тĕреклентерет. Румыңҍине вăрçă йенҍен тĕреклентерни унăн çарне тĕрлĕ вăрçă хатĕрĕсем парса тăнинҍен паллă. Латвипе Естоңҍире те ĕçсем çавăн пекех пыраççĕ, вĕсем те еккономĕк йенҍен Анклийе пăхăнса тăраççĕ.

Кивçен укçасем тата ытти йапаласем парса пирĕнпе йунашар патшалăхсен политтĕк

ĕçне Анкли хăйне кирлĕ пек тутарса пыртарат̆, çав патшалăхсене Совет Сойусне тапăнмалли çулсем кăтартса парат̆.

## Токăвăрсем çинђен.

Иртнĕ виç-тăват çул Пољшă никамран ытла Франтсийе пăхăнса пурăнађђĕ. Йулашки çул, Анклири конçерваттăрсен правиттĕлствин ђейе ĕçĕсене пăхăнса, Пољшă ђасах Анкли йенне кайса ўкрĕ.

Пољшă хыççăн Румыђи те тата Палтти тинĕсĕ йенђи патшалăхсем те (Естођи, Латви, Литва, Финљанти) Анкли йенне çавăрăнса ўкеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене Анкли Совет çĕршывне хирĕç тăма хатĕрленме укçан та, ĕçпе те пулăшса тăрат̆. Çав тĕлĕшрен 1926-мĕш çула Анкли Совет çĕршывне хирĕç тăма хатĕрлене пуçланă çул теме пулат̆. Çав çул кивĕ токăвăрсене çĕнетме пуçланă, çĕнĕ токăвăрсем те тунă, вĕсем пурте пĕрпĕрин çине тапăнмалла марри çинђен, тăшмана хирĕç пурин те пĕрлешсе тухмалли çинђен. Вĕсен „тăшманĕ"—пирĕн Совет çĕршывĕ.

1923-мĕш султа Пољшăпа Румыђи пĕрлешў токăвăрĕ тăваççĕ, кайран тепĕр токăвăр

пĕрпĕрне тапăнмалла марри çинђен, кирлĕ вăхăтра Совет Сойусне хирĕç тăма пĕрле тухмалли çинђен тăваççĕ. 1926-мĕш çулта вăл токăвăрсене çĕнетнĕ. Кашни харпăр хăй тĕллĕн Пољшă та, Румыњи те пире тапăнма пултараймаççĕ, вĕсен пирĕнпе вăрçма вăйсем çитмеççĕ, вĕсен пире хирĕç иккĕшĕн пĕрле тухас пулать, çавăнпа та Пољшăпа Румыњи ĕлĕк тунă пĕрлешӳ токăвăрне çĕнетнĕ.

Латвипе Естоњи 1921-мĕш çултах „военнополиттиђђĕски“ сойус тунă, вăл сойуса вĕсем Совет çĕршывĕпе вăрçă пуçлансан, ăна хирĕç пĕрле тухма тунă. Латвипе Естоњи патшалăхĕсем хăйсем çуралнă малтанхи кунсенђех Анкли аллине кĕрсе ӳкнĕ. Латви тата Естоњипе Пољшă та килĕштерсе пурăнаççĕ. Çавăнпа та Пољшăпа Румыњи токăвăрĕ тата Латвипе Естоњи сойус туни—йунашар патшалăхсем, вăрçă пуçлансан, пурте пĕрлешсе пире хирĕç тухасса пĕлтереççĕ.

Румыњипе Иттаљи çав çултах пĕрлешӳллĕ токăвăр тунă. Иттаљипе Анкли иккĕшĕ пит лайăх пĕрлешсе пурăнаççĕ, вĕсем пулас вăрçăра пирĕн Республĕксен Сойусне пĕрле пулса тапăнасшăн.

Анкли хăй ĕçне турĕ, Поԓшăна та, Румынԓине те вăл хăйне пăхăнтарԓĕ. Латвипе Естоԓийе тата Финԓантийе илсессĕн, вĕсем те ԓи малтан Анкли çине пăхса пирĕн çине „вăрçă куçĕпе“ пăхаççĕ. Унтан тата 1926-мĕш çулти май уйăхĕн 15-мĕш кунне илер. Çав кун Поԓшăра пит пысăк улшăну пулԓĕ. Поԓшă вăл темократтилĕ патшалăх майлăԓԓĕ, кайран (çав май уйăхĕн 15-мĕш кунĕнԓе, 1926-мĕш çулта) Поԓшăри влаç Пилсутски аллине кĕԓĕ. Пилсутскин влаçĕ—Поԓшăри панккирсен, помешԓĕксен влаçĕ. Пилсутски çав улшăнăва Анкли хушнипе тунă, çавăнпа та Поԓшă халĕ Совет Респуплĕкĕсен Сойусне никамран та ытла кураймасť.

Çав 1926-мĕш çулăн теккапĕр уйăхĕнԓех Латвире влаçе фашшиссем (вăрçăшăн, патша саманишĕн çунакан çынсем) туртса илеççĕ.

Ун пек ĕç Литвара та пулмаллаԓԓĕ, анԓах унти комуниссем ĕçхалăхшĕн вăйлă тăрса, Литвари влаçе фашшиссен аллине памарĕçха. Литва пирĕнпе пур йенԓен те килĕшӳллĕ пурăнаť. Анԓах Анкли пире шутсăрах кураймасť, çавăн пирки вăл хăйне пăхăнакан патшалăхсенԓи влаçе пурне те фашшиссене

парасшăн, унăн аллинђи патшалăхсенђе çав фашшиссем пуç пулсан вара Анклин пире тапăнас ĕмĕђĕ çитрĕ. Анклири çут çамкасем (мул хуçисем) Иттађири патшалăх пуçлăхĕпе—Муссолинипе—туслашса, унăн фашшисĕсемпе пĕрлешсе, пирĕнпе йунашар патшалăхсене те пире хирĕç вăрçа хатĕрленме ђĕнеççĕ.

**Пире хирĕç патшалăхсен вăрçă хатĕрĕсем ӳсни.**

Пысăк патшалăхсем: Анкли, Франтси, Иттађи тата Çурçĕрти Америкри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулас вăрçа пит хытă хатĕрленеççĕ. Çав патшалăхсенђен кашнийех хăйсен çарĕ вађђи укçа çултан çул нумайрах парса пырат. Тĕнђе вăрçи пуçланађђен пĕр çул малтан—1913-мĕш çулта тĕнђере ђи вăйлă тăвата патшалăхсен (çав çӳлте каланисен) çар вађђи паракан укçа 1 мĕлйарт толлăртан кăшт сахалтарах пулнă. 1926 çулта çав патшалăхсен çар вађђи панă укçи 1.768 мĕлйун толлăра çитнĕ, урăхла каласан, вĕсен çар пӳтшеђĕ 13 çул хушшинђе 80% таран хутшăннă. Çав вăйлă патшалăхсен çар пӳтшеђĕ çавăн пек ӳссе пыни вĕсем вăрçа 1913-мĕш çулхинђен те вăйлăрах хатĕрленнине пĕлтерет.

327/2

Анклин, Франтсин, Иттаљин, тата Çурçĕрти Америкĕн çарсенђе мĕн пурĕ 1913-мĕш çулта 1.413.000 çын пулнă, халĕ вĕсен çарĕсенђе мĕн пурĕ 1.821.000 çын шутланаť.

Çав тăвată патшалăх вăрçа хатĕрленни тата зкă çакăнтан паллă: 1913-мĕш çулта вĕсен вăрçăра пулмалли йероплансем 150 пулнă, халĕ—3.840 йероплан. Тинĕс çинђи вăрçă карапĕсене илсен, вĕсене те йышлăлантараççĕ. Вĕсене йышлăлантарма ђарăнасси çинђен Америкĕн тĕп хулинђе Вашинхтонра конферентси те туса иртерђĕç те, çапах тинĕс çинђи карапсем кăпиталисăмлă патшалăхсен йышланаççех, вĕсене тума уйăрса хунă укçана ўстерееççех. Пысăк линейнăй карапсем тăвас вырăнне Анкли, Америкĕ, Франтси тата Иттаљи пĕђĕк крейççĕрсем, шыв айĕнђе çўремелли локăсем тăваççĕ.

Йури конферентсисем пухса вăрçă хатĕрĕсене сахаллатасси çинђен супăљтетнĕ вăхăтрах, çав пысăк патшалăхсем тупăсем, снаретсем тăвакан савăтсем нумайран нумай ларта пуçларĕç, вăл савăтсенђе ĕç пултарулăхне 1917—18-мĕш çулхи хисеппе 100% вырăнне хурсан, 1927-мĕш çулта унăн вăрçă



22762

пултарулăхĕ 150—160% çитиђђен ўснĕ. Амерĕкре те çавăн пекех: 1917—18 çулта унăн вăрçă пултарулăхĕ 100% хисепĕнђе пулсан, 1927-мĕш çулта 140—150% çитиђђен ўснĕ.

Вăйлă патшалăхсем çĕнĕ вăрçа хатĕрленни çак ђыхвăрсенђен пит лайăх курăнса тăрать. Çав ĕçре Анкли ђи малта пырать. Пирĕн Совет Сойусне хирĕç Анкли тен ђи малтан хăй тухмĕ.

Пире тапăнма вăл хамăрпа йунашар патшалăхсене: Пољшăна, Румынђине, Латвине Естоњине тата Финљантине хатĕрлет.

Çавăнпа та вĕсем пире хирĕç тапратас вăрçа мĕнле хатĕрленнине кĕскен те пулсан пăхса тухар.

## Пољшă вăрçа хатĕрленни.

1923-мĕш çулта Пољшăн тип çĕр çинђи çарĕнђе 264.000 çын пулнă, 1927-мĕш çулта 312.000 çынна çитнĕ. Уњсăр пуçне тата Пољшăра кăрçă ĕçне вĕренекен сойуссем пур, вĕсенђе 1923 çулта 150 пин çын пулнă, 1927-мĕш çулта вĕсен ђленĕсем 565 пин çынна çитнĕ. Пољшă халăха вăрçа хатĕрлес йенђен пысăк утăмсем туни урăх ним каламасăрах курăнса тăрать.

Пољшăн сывлăш флођĕ йулашки віçĕ çул хушшинђе 2 хут ытла ӳсрĕ: халĕ унăн 275 йероплан, 1925-мĕш çулта унăн 120 йероплан анђахђĕ. Стройри йероплансемсĕр пуçне Пољшăн саппасрисем те пулма кирлĕ, ăна сывлăш флотне ӳстерме Анклипе Франтси хуť хăçан та пулăшма хатĕр.

Халĕ Пољшă хăйĕн тинĕс çинђи флотне ӳстерме пĕтĕм вăйĕпе тытăннă. Кирлĕ карапсене тума вăл Анклипе Франтсийе саккас нумай панă, вĕсенђен ђылайĕшĕ халь флотра. Пољшăра кашни 1000 çын пуçне 10,4 çар сынни. Совет Сойусĕнђе кашни 1000 çын пуçне 3,8 çар çынни анђах тивет. Пољшăн пĕтĕм пӳтшетĕнђен 35$^0/_0$ çар пӳтшетне кайаť.

Пољшăра çар ваљђи илекен укçа кашни ђун пуçне 8 тенкĕ те 50 пус тивет. Çак ђыхвăрсем Пољшă вăрçа мĕнле хатĕрленнине пĕлтереççĕ.

### Румыњи çинђен.

Румыњи вăл тĕрлĕ вак халăхсен патшалăхĕ. Иртнĕ тĕнђе вăрçинђе Румыњи çарĕнђе 95$^0/_0$ румынсем пулнă пулсан, халĕ Румыњи çарĕнђе румынсем 60$^0/_0$ анђах. Румыњи

çарĕнҫе венкерсемпе нимĕҫсем—14%, пессараптсăсемпе пăлкарсем—8%, ыттисем: руççинсем, турккăсем, вырăссем, йеврейсем. Румыньире тĕрлĕ халăхсем хушшинҫе пит пысăк тавлашу пырать, вăл тавлашу Румыньи çарĕ хушшине те кĕрсе кайнă. Румыньи правиттĕлстви хăйĕн çарĕнҫи офитсерсене пурне те румынсенҫен тăвасшăн. Румыньи çарĕнҫе рапоҫҫисем 25%, хресҫенсем 65% йахăн. Офитсерсем унта салтаксене çын выранне хумаççĕ. Йулашки çулсенҫе Румыньи хăйĕн çарне нумай ӳстерҫĕ. 1923 çулта унăн çарĕнҫе 153.000 çын анҫах пулнă, 1917 ç. 164.000 çынна çитнĕ. Румыньире кашни 1.000 çын пуçне 9,6 çар çынни тивет (аса илер, Совет Сойусĕнҫе 3,8 çын анҫах тивет); ку йапала Румыньи пысăк çар тытнине, вăл вăрçа хатĕрленнине пĕлтерет.

Çар расхуҫĕсем Румыньин, Польшăн пекех, çултан çул ӳссе пыраççĕ.

Сывлăшри вăрçă флоҫĕ те Румыньин йулашки çулсенҫе ҫылай ӳсрĕ.

1923-мĕш çулта унăн стройра 60 йероплан пулнă, 1927-мĕш çулта 150 йероплана çитнĕ.

Тинĕс флоҫĕ Румынҫин наҫартарах ĕнтĕ хуҭ. Хура тинĕс ҫинҫе унăн 6 вăрçă карапĕ анҫах, пирĕн Совет Сойусĕн 28. Унтан тата Румынҫи çарĕ пек наҫар, хавшак çар Йевроппăра урăх çук, теççĕ. Анҫах халĕ Анкли инструктăрĕсем, офитсерĕсем пулăшнипе Румынҫи çарĕ хастарланса пыраҭ. Румынҫи çарĕ техниккă йенҫен те ҫылай вăйлă, унăн хĕçпăшалĕсем те наҫар мар. Румынҫи тата вăрçă хатĕрĕсем тăвакан савăтсем лартаҭ, вăл йенҫен ăна Анкли пулăшаҭ. Çавăнпа та Румынҫи пирĕншĕн вăйлă тăшмансенҫен пĕри пулма пултараҭ.

Анҫах Румынҫири рапоҫҫисен, Пессарапири хресҫенсен наҫар пурнăçне аса илсен, унти рапоҫҫисемпе хресҫенсене Румынҫи пойарĕсем, помешҫĕкĕсем çын вырăнне хуманнине шута илсен, Румынҫин хăйĕн патшалăхĕнҫех пирĕн майлă çынсем нумаййи курăнаҭ. Çавăнпа та Румынҫи пулас вăрçăра пирĕншĕн хăрушах мар.

**Финљанти вăрçа хатĕрленни.**

Пирĕнпе йунашар Финљанти вăл пирĕнрен çурçĕрпе хĕвеланăç йенелле. Финљантире 89% финсем, 11% шветсем пурнаççĕ. Финљантин

шалти политтĕк ĕçĕсем патшалăха вăрçа хатĕрленме пулăшаймаççĕха. Ђухăн хресђенсене пуйаннисем, кулаксем унта пит хытă хĕстереççĕ. Рапођђисен пурăнăçĕ унта нађарлансах пырать. Финљантире рапођђисем сапастовккă мĕн пуçласан вĕсене хĕçпăшалпа пусарас йĕрке халĕ те пырать. Çавна тума Финљанти правиттĕлствин фашшиссен орканисатсийĕсем пур. Финљанти çине екномĕккă йенђен пăхсан, вăл ытти патшалăхсемсĕр, хăй тĕллĕн пирĕнпе нумайђен вăрçма пултараймасть.

Финљанти çарĕ финсен шурă çарĕнђен, 1918-мĕш çулта унти Советсене, рапођђисен востаљине пусарнăскерĕнђен, пуçланса кайнă. Унти шурă квартин, урăхла каласан шђутскорăн, историйĕ пит авалтанпа пырать. Краштăн вăрçи пуçлансан çав шђутскор орканисатсийĕнђен патталйонсем, полксем турĕç те, вара йаланах хатĕр çар пулса кайрĕ.

Вăрçă çук ђухне Финљанти çарĕнђе 3 тивиçи, утлă прикатă—1. Финљанти çарĕнђе мĕн пурĕ 32.000 çын, 1923—24-мĕш çулсенђе 30 пин çын пулнă. Кашни 1000 çын пуçне унта 9,5 çар çынни тивет, пирĕннинђен 3 хут ытла.

Финљанти правиттĕлстви хăй çарĕнђи ретовой салтаксем çине шанмасť, правиттĕлствă вĕсене политтĕк çинђен пĕлтересшĕн мар. Финљанти пуршуаçийĕ, çартан „хĕрлĕ çар" шăрши кĕрет, тет, çавăнпа та леш фашшиссен—шђутскорсен орканисатсине вăйлăлатма тăрăшаť. Халĕ çав орканисатсисенђе 95000 çын.

Финљанти вăрçа пит çине тăрса хатĕрленни çак çӳлте каланисенђен пит лайăх палăрса тăраť.

Финљантин сывлăш флотĕнђе 1923-мĕш çулта 40 йероплан пулнă, 1927 çулта 80 çитнĕ, виçĕ çул хушшинђе унăн сывлăш флођĕ 2 хут ӳснĕ.

Çар расхуђĕсем те унăн çултан çулах ӳссе пыраççĕ. 1923-мĕш çулта унăн çар расхуђĕ 10.700.000 толлăрлăх пулнă, 1925-мĕш çулта—14.900.000 толлăра çитнĕ.

Финљанти Анклийе пăхăнса пурăнакан, ăна итлекен патшалăх, çавăнпа та пулас вăрçăра вăл та пире тапăнасса кĕтме пулаť.

## Палтти тинĕс хĕрринђи ытти патшалăхсем çинђен.

Естоњипе Латви тата Литвă—Палтти тинĕсĕ хĕрĕнђи патшалăхсем—Анклийе пăхăнса

пурăнаççĕ. Естоҫипе Латви пĕрпĕрне тапăнмалла марри ҫинҫен, тата вăрçă пуçлансан пĕрле пулса тăшмана хирĕç тăмалли ҫинҫен токăвăр тунă, çавăнпа та вăл патшалăхсем вăрçа мĕн ҫул хатĕррине пăхса тухма кирлĕ.

Естоҫин промышлĕнăçĕ пит наҫар. Патша вăрçиҫҫен пулнă тимĕр шăратакан пысăк савăтсем унăн халĕ вуçах ĕçлемеççĕ. Çавăнпа рапоҫҫи клас та унта вăйлă мар. Пĕр вăхăтра унта вăйлă востаҫи пулнă хыççăн Естоҫири комуниссен парттине пусарса лартнă. Сотсиал-темократсем II-мĕш интторнатсионалăн сылтăмрисем майлă. Çав йапала вăл Естоҫи Совет çĕршывне тапăнма хатĕрленнине пĕлтерет.

Латви промышлĕнăçĕ те, Естоҫин пекех, наҫар. Латвире промышлĕннăç вуçах çук.

Латвипе Естоҫи вăрçа хытă хатĕрленни акă мĕншĕн паллă: 1923-мĕш çулта Латвин çар расхуҫĕ 5.500.000 толлăр тухнă; 1924-мĕш çулта—6.800.000; 1925-мĕш çулта—9.100.000.

Естоҫин 1923-мĕш çулта —4.100.000; тол. 1925-мĕш çулта—4.800.000. Естоҫин çарĕнҫе 1923-мĕш çулта 12.000 çын пулнă; 1927-мĕш

çулта 14 пине çитнĕ. Естоҫин çĕршыв аслăшне, унта мĕн ҫухлĕ халăх пурăннине илсессĕн, унăн çарĕ ытти пирĕнпе йунашар патшалăхсенҫен ҫи йышли паллă. Естоҫире кашни 1.000 çын пуçне 12,7 çар çынни тивет. Латвире кăшт кайарах, унта кашни 1000 çын пуçне 11,1 çар çынни тивет.

Вĕсенпе пирĕн патшалăхра миçе çын пурăннине шута илсе танаштарса пăхсан, Латвин те, Естоҫин те çарсем пирĕннинҫен 4 хут пысăкрах.

Латвин сывлăш флотĕнҫе 1923-мĕш çулта 25 йероплан пулнă; 1927-мĕш çулта 40 çитнĕ. Естоҫире 1923-мĕш çулта—15 йероплан пулнă; 1927-мĕш çулта—25 çитнĕ. Унтан тата Латвипе Естоҫире те, Финљантири пек, вăрçа хатĕрленекен ăрасна орканисатсисем пур. Пирĕнпе йунашар патшалăхсенҫи çав орканисатсисенҫе 1925-мĕш çулта мĕн пурĕ 450.000 çын пулнă, 1927-мĕш çулта 715.000 çынна çитнĕ. Вĕсем пурте пулас вăрçа, тĕнҫери пĕртен пĕр Совет Сойусне тапăнма хатĕрленеççĕ.

**Тӑшмансем ытла вӑйлах мар, епӗр те ытла наҕарах мар.**

Кӑпиталисӑмлӑ патшалӑхсем вӑрҫӑ тӗлӗшӗнҕен таҫта ҫитех ӳссе кайнӑ тесе тӗттӗм халӑх хушшинҕе тӗрлӗрен суйа халапсем ҫӳреҫҫӗ. Кӑпиталиссен тупӗсем те пин ҫухрӑмран переҫҫӗ пулаҭ вара, вӗсен йеропланӗсем те пӗрер полк йӑтса хӑпартса вырӑнтан вырӑна куҫарма пултараҫҫӗ иккен, тата хими кассемпе пӗр минутрах ҫӗр ҫинҕи пур ҕӗрҕуна та вӗлерме пултараҫҫӗ иккен. Ҫавӑн пек суйа сӑмахсене ӗҫхалӑхӗн тӑшманӗсем сарса ҫӳреҫҫӗ, вӗсем пирӗн сехресене хӑпартса, ӗҫхалӑхӗн хастарлӑхне пусарасшӑн. Ҫав суйа сӑмахсене ҕас сарӑлма тата хут пӗлменни пулӑшаҭ. Хут пӗлмен ҫынна хуҭ мӗн каласан та, вӑл ӗненет, хӑй мӗн илтнине ыттисене каласа параҭ. Хут пӗлекен ҫын апла мар: вӑл кӗнеке-хаҫат илет те, самана ҕӑнах та мӗнлине вуласа пӗлет. Ҕӑнах та халӗ тупӑсем тӗнҕе вӑрҫинҕи пек мар, ун ҕухнехинҕен инҫерех переҫҫӗ, анҕах пин ҫухрӑма ҫитересси инҫе хаљ вӑл. Авиатси ӗҫӗ те пит вӑйлӑланса кайрӗ, ӗлӗк вӗсем кӑпиталисӑмлӑ патшалӑхсенҕе 10-шарӑн

шутланнӑ пулсан, халӗ вӗсем ҫӗршер, пиншер пур.

Хими промышлӗннӑҫӗ те ђылай малалла кайнӑ, ҫынна вӗлермелли тӗрлӗ кассем хатӗрлет, анђах ҫапах та, халӑха пӑлхатса ҫӳрекенсем каланӑ ђухлех малалла кайманха, ҫӗр ҫинђи мӗн пур ђӗрђуна пӗр минутрах вӗлермелӗхех ӳсейменха.

Кӑпиталисӑмлӑ патшалӑхсен вӑл та, ку та пур пулсан, вӗсем вӑрҫӑ тӗлӗшӗнђен вӑйлӑланса пыраҫҫӗ пулсан, вӗсен пуррисем пирӗн те пур, йероплансем те, инҫете перекен тупӑсем те, тӑшмана пӑвмалли хими кассем те, пурте пирӗн те пур.

Вӗсем пире тапӑнса хресђенсенђен ҫӗр, патшалӑхран хапрӑк-савӑтсене туртса илме хӑтлансан, вӗсене хӑваласа йама пирӗн те тӗрлӗ вӑрҫӑ хатӗрӗсем ирӗксӗрех нумайлатас пулат.

Анђах нимрен ытла ҫакна манмалла мар: пирӗн тӑшмансем ытла вӑйлах мар, епӗр ытла нађарах мар. Ӑна пӗлес тесен, епӗр хамӑр Хӗрлӗ ҫар мӗн таран вӑйлине, унӑн вӑйӗ мӗнрен килнине пӑхса тухӑпӑр.

## Пирĕн Хĕрлĕ çар кирек хăçан та хатĕр.

Пирĕн Хĕрлĕ çар краштăн вăрçинђе ђăмăртаннă, çар ĕçне вăл вăрçă хирĕсенђе вĕреннĕ. Ун ђухне çитменлĕхсем пирĕн пит нумай пулнă, хĕрлĕ салтаксене кирлĕ таран вĕрентме вăхăт пулман, мĕншĕн тесен тăшмансем – помешђĕксемпе кăпиталиссем пире пит хытă тапăнђĕç. Револђутсиллĕ çар тисђиплинĕ те ун ђухне Хĕрлĕ çарта халђхи ђухлĕ пулман, мĕншĕн тесен пĕрпĕр çар пайне пухса çитерне çитерменех ăна тăшмана хирĕç йамаллађĕ. Хĕрлĕ çарта ун ђухне вăрçă ĕçне лайăх вĕреннĕ комантирсем те пулман, вĕсене вĕрентме вăхăт çукђĕ. Хĕрлĕ çара хирĕç ун ђухне лайăх вĕреннĕ шурă çар тăрађђĕ, унăн комантирĕсем аслă шкулсенђе, çар шкулĕсенђе вĕренсе тухнă кенералсем, полкковниксем пулнă; кăпиталиссем шурă çарсене танккăсемпе, йеропланcемпе, тупăсемпе, тумтир таврашĕпе, тата укçан та пулăшађђĕç. Анђах çапах та Хĕрлĕ çар вĕсене çĕнтерђĕ, рапођђисемпе хресђенсен влаçне туртса илме памарĕ. Хĕрлĕ çар шурă çарсене çĕнтерни рапођђисемпе хресђенсем вăрçă

вăхăтĕнҕе çирĕп пĕрлешнинҕен, кăпиталиссемпе помешҕĕксене хирĕç хытă тăнинҕен килҕĕ. Кашни хĕрлĕ салтак хăй мĕншĕн çапăçнине пит лайăх пĕлсе тăнă. Шуррисен хăйсен çарне илнĕ хресҕенĕсем те, тĕрĕслĕх Хĕрлĕ çар йенҕине курса, унăн йеннелле тара тара каçнă.

Халĕ Хĕрлĕ çар пит вăйлă, пит хăватлă. Краштăн вăрçи пĕтсен епĕр Хĕрлĕ çара пит лайăх йĕркене кĕртрĕмĕр: хĕрлĕ салтакăн çарта миçе çул вĕренсе пурăнмалли срук тунă, çартан тухсан хăçанҕҕен саппас хисепĕнҕе пулмаллине те уйрăм кăтартса панă, револьутсиллĕ тисҕиплинă та çарта халĕ пит çирĕп.

Вăрçă пулас мĕн пулсан хĕрлĕ салтаксене, комантирсене ҕас çарра илсе, вĕсене хăш вырăна йамалли плансене çар штапĕсем пит лайăх хатĕрлесе хунă. Пуршуаçи пирĕн патшалăха тапăнас шухăш тытсан, Хĕрлĕ çар хăйĕн полккисене ҕасах, вăхăтра йышлантарса, Совет Сойусне сыхлама иксе тухĕ.

Хĕрлĕ çарта халĕ хĕрлĕ салтаксене çар искусствин ҕи çĕнĕ ăслайĕсемпе вĕрентеççĕ. Пирĕн хаљхи хĕрлĕ салтаксем вăрçă ĕçне,

краштăн вăрçинђи хĕрлĕ салтаксенђен (патша çарĕнђи салтаксем çинђен каламалли те çук) лайăхрах пĕлеççĕ.

Вăрçă тĕлĕшĕнђен пит малта пыракан капиталисăмлă патшалăхсенђе çарсене мĕнле вĕрентеççĕ, пирĕн Хĕрлĕ çара та çавăн пекех вĕрентеççĕ. Хĕрлĕ çара вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшрен епĕр кайа йулма мар, хамăрпа йунашар патшалăхсенђен малта пыратпăр, епĕр вĕсенђен иртсе кайнă. Епĕр вĕсенђен иртсе кайни акă мĕнтен килет: хĕрлĕ салтак çарта хут вĕренет, кĕнекесем, хаçатсем вулаť, политтĕк ĕçĕсене, ăçта мĕнле самана пулса пынисене асăрхама пултараť, çав ăна вăрçă ĕçне вĕренме те иулăшаť. Салтак мĕн ђул тĕттĕмрех, хут мĕн ђул сахалтарах пĕлет, çавăн ђул ăна вăрçă ĕçне вĕренме те йăвăртарах. Илер тата пирĕн Хĕрлĕ çарти командирсене. Командирсем халĕ пирĕн вăрçă ĕçне краштăн вăрçи ђухнехинђен темиçе хут лайăх пĕлеççĕ. Командирсем пирĕн пурте, хĕрлĕ салтаксем пекех, рапођђисемпе хресђенсенђен тухнăскерсем. Çавăнпа та пирĕн хĕрлĕ салтакпа командир

хушшинҫе кăпиталисăмлă патшалăхсен ҫарĕсенҫи ăраснаăх ҫук, вĕсенҫе салтаксем — рапоҫҫисемпе хресҫенсем; комантирĕсем — творепсем, помешҫĕксем, кăпиталиссем, кулаксем. Пирĕн Хĕрлĕ ҫарта: вĕреннĕ вăхăтра комантир—хĕрлĕ салтак наҫҫаљникĕ, ахаљ ҫух—унăн тăванĕ, комантирпе хĕрлĕ салтак пĕрпĕринпе тăван пек пурăнни Хĕрлĕ ҫарăн хăватне ÿстерет. Ĕлĕк офитсерсем пулнă комантирсем (вĕсем халĕ Хĕрлĕ ҫарта сахал) краштăн вăрҫинҫе, тата ун хыҫҫăнхи лăпкă вăхăтра ҫар ĕҫне вĕрентсе, хĕрлĕ салтаксемпе, халхи ҫĕнĕ комантирсемпе ҫăтă-ҫăтах пĕрлешсе ҫитрĕҫ, ҫавăнпа ĕлĕк офитсерсем пулнă комантирсемпе халхи ҫĕнĕ комантирсем хушшинҫе нимĕнле ăрасналăх ҫук.

Пирĕн комантирсем пурте вăрҫă ĕҫне вĕрентекен шкулсенҫе ҫĕнĕрен вĕрене-вĕрене тухрĕҫ. Пирĕн тата „Войеннăй Аккатеми" йатлă аслă шкул пур, унтан кашни ҫулах вуншар ҫĕнĕ аслă комантирсем вĕренсе тухаҫҫĕ.

Пирĕн комантирсем кăпиталиссен ҫарĕсенҫи комантирсенҫен лайăхрах тесе епĕр

пĕр каллĕ-маллĕ шухăшламасăрах калама пултаратпăр. Мĕншĕн? Акă мĕншĕн.

Пирĕн комантирпе Пољшă офитсерне йунашар тăратарха. Вĕсем иккĕш те пĕр прокраммăпа çар шкулне вĕренсе тухнăскерсем пулђђăр. Калăпăр, вĕсем çар ĕçне иккĕш те пĕр пекех пĕлеççĕ.

Анђах мĕнле пахалăх пурши Пољшă офитсерĕн? Унăн пахалăхĕ пур. Пирĕн рапођђи, йе хресђен халăхĕнђен тухнă комантир тул йенђен пăхсан кăра тумланман, аттисем унăн лаккированнăй мар, Пољшă офитсерĕ пит кăрт тумланат̆, аллисенђе унăн шурă перђеткăсем, ташлама та вăл лайăх пĕлет.

Çав „пахалăхсем" унăн хăйпе пĕрлех пулђђăр хут̆, анђах тӳррипех каламалла, вăл политтĕк çинђен пирĕн комантирсем ђухлĕ пĕлмест, вăл ăна пĕлесшĕн те хыпмаст̆, çав йенђен вăл пирĕн комантирăн хăрах пĕççи тĕшне те тăмаст̆ (хаљхи вăхăтра политтĕк çинђен пĕлни темрен те паха). Пољшă офитсерĕсем вĕсем, пирĕн ĕлĕкхи патша офитсерĕсем пекех, салтаксемпе пĕр тивĕçлĕ мар, пĕрлешӳллĕ мар, çавăнпа та вĕсем хăйсен салтакĕсен тăшманĕсем пулаççĕ.

Поԓшă çарĕнђи тисђиплинă пит хайар пулсан та, унăн салтакĕсем хăйсен командирĕсене шутсăрах кураймаççĕ. Пирĕн командирсем хыççăн хĕрлĕ салтаксем вутта та, шыва та кайсах кĕме хатĕр пулсан, Поԓшăри салтаксем хăйсен командирĕсем çине ун пек шанса, вĕсем хыççăн вăрçа кĕрсе кайас çук.

Çапла ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ çарти командирпе Поԓшă çарĕнђи командир политтĕк йенђен те, вăрçă ĕçне пĕлнĕ йенђен те танаштарса пăхсан, пирĕн командирсем кăпиталисăмлă патшалăхсен çарĕсенђи командирсенђен лайăхраххи курăнаť.

Анђах пирĕн Хĕрлĕ çарăн йышĕ пит сахал, Хĕрлĕ çарта мĕн пурĕ 562.000 çын анђах. Çавăнпа та кашни рапођђипе хресђенĕн вăрçă пулас мĕн пулсан, çар ĕçне вĕреннĕ çынсем çинђен, саппасра шутланакансем çинђен шухăшлас пулаť. Вăл йенђен пăхсан пирĕн вырăнти çар пайĕсем пур. Вĕсем халĕ, Револютсиллĕ Çар Советĕн претçетаттĕлĕ Ворошиловăв йулташ калашле, ђылай çирĕпленсе çитрĕç, вĕсем Хĕрлĕ çара çынсем парса тăракан çăлкуççем, вĕсем политтĕк йенђен те, вăрçă ĕçне пĕлнĕ йенђен те ђылай малалла кайрĕç.

Çавăнпа та, вăрçă мĕн пулас пулсан, темиçе мĕлйун рапоъъисемпе хресъенсене Хĕрлĕ çарăн вăрçă йалавĕсем айне пухса „ытлашши йун тăкмасăрах“ тăшмана çĕнтерме пулаŷ.

### Совет Сойусĕн сывлăш флоъĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ çар кăпиталисăмпă вăйлă патшалăхсен çарĕсĕнъен пĕртте кайа маррине епĕр куртăмăр.

Анъах вăрçă хатĕрĕсем йенъен, техниккă йенъен мĕнле вырăнта шутланаŷши пирĕн Хĕрлĕ çар?

Винттовккăсемпе пулеметсем, тупăсем, кранаттăсем çинъен кунта асăнмасан та йураŷ—вăл йенъен епĕр пире хирĕç тăрас ъăн тăшмансенъен (никамран ытла хамăрпа йунашар патшалăхсенъен) пĕртте кайа мар.

Епĕр ъи малтан йероплансем тăвас ĕç пирĕн мĕнле пынине пăхса тухар. Вăл тĕлĕшрен пирĕн куçа хупмасăрах, тӳрех калас пулаŷ: епĕр йероплансен шуъĕ йенъен кăпиталисăмлă ъи вăйлă патшалăхсенъен кайарах, мĕншĕн тесен патша вăрçиъъен пирĕн Раççейре авиатси промышлĕннăçĕ пулман пирки йероплансем вуçах туман, йероплан мотторĕсене

пуринђен ытла Анклирен кӳрсе тӑнӑ, анђах патша вӑрҫипе краштӑн вӑрҫи мӗн пур пек йероплансене йӑлтах ҫӑтса йађӗҫ.

Йероплансем хамӑр патшалӑхра тума епӗр краштӑн вӑрҫи пӗтсен тин пуҫӑнтӑмӑр. Малтанах вӑл ӗҫ пирӗншӗн ҫӗнӗ ӗҫђӗ, пирӗн вӑл ӗҫе пӗлекен иншенерсем те, рапођђисем те ҫукђӗ, йероплансем тумалли кирлӗ хатӗрсем те ҫукђӗ, анђах епӗр вӑл ҫитменлӗхсене ҫӗнтерсе, халӗ пит хӑвӑрт малалла кайса пыратпӑр.

1920-мӗш ҫулта пирӗн сывлӑш флотӗнђи йероплансене 100% хисеплесен, епӗр ӳссе пыни акӑ ҫак ђыхвӑрсенђен паллӑ:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1921-мӗш | ҫулта | епӗр | 16,4% | ӳсрӗмӗр. | |
| 1922 | „ | „ | „ | 27,2% | „ |
| 1923 | „ | „ | „ | 36,4% | „ |
| 1924 | „ | „ | „ | 115,4% | „ |
| 1925 | „ | „ | „ | 304,0% | „ |
| 1926 | „ | „ | „ | 411,6% | „ |

Ӗлӗк йероплан мотторӗсене пирӗн патшалӑхра вуҫах тӑвайман пулсан, халӗ епӗр вӗсене хамӑр патшалӑхрах тӑватпӑр: 1923-24 ҫулсенђен пуҫласа, виҫӗ ҫул хушшинђе епӗр

547 моттор туса çитертĕмĕр. Сывлăш флођĕн вăйĕ йеропландсем йышлинђен анђах килмест, љотђĕксемпе мотториссем хăйсен ĕçĕсене пĕлнинђен те палăрса тăрат̆.

Çавăнпа пирĕн хамăр љотђĕксемпе мотториссем çинђен те пĕлес пулат̆. Сывлăш флођĕн шкулĕсем, тата профессăр Шукковски йађĕпе уçнă „Сывлăш Çарĕн аккатемийĕ“ çул кăтартса пынипе, љотђĕксемпе мотториссене çителĕклĕ, ăнăçлă вĕрентсе кăлараççĕ. Пирĕн Совет љотђĕкĕсем йеропландсемпе темиçе пин çухрăм вĕçсе кайа кайа килсе, тем çӳллĕш тусем, тем аслăш тинĕссем, вăрмансем урлă вĕçсе каçса пĕтĕм тĕнђене тĕлĕнтерђĕç; вĕсенђен ђи тĕлĕнмеллисем: Мускавран Пекăна (Киттайа) 1925-мĕш çулта кайса килни, 1926-мĕш çулта Мускавран Анкорăна (Туртсийе) Хура тинĕс урлă тип çĕр тĕлĕнђе çӳремелли йеропланпа кайса килни; Мускавран Текерана (Перççийе) кайса килни: љотђĕк Кроммăв „Пролеттари“ йатлă йеропланпа Йевроппă тавра 3 кун хушшинђе çавăрăнни. Унтан тата 1927-мĕш çулта çент̆апĕр уйăхĕнђе Шестакков љотђăкпа Фуфайĕв мотторис Мускавран Токкиона (Йаппонийе) кайлă

майлă 22 пин çухрăм, сĕм вăрмансем, тинĕссем урлă вĕçсе кайса килнинђен пĕтĕм тĕнђе тĕлĕнет.

Ку йапала мĕне пĕлтерет? Пирĕн љотђĕксем те, мотториссем те, йеропласем те вăйлă патшалăхсеннинђен пĕртте кайа маррине, вĕсем пулас вăрçа хатĕррине пĕлтерет вăл. Тăшмансем пире тепĕр 5—6 çул канма вăхăт парсан, пире тапăнмасан, епĕр вĕсенђен сывлăш флођĕпе парăнас çук. Çавăнпа та пирĕн сывлăш флођĕ нађар пулĕ тесе ĕçхалăхĕн хăрамалли çук: епĕр вăл йенђен ўссе пыратпăр, малалла та пĕр ђарăнмасăрах ўсмелле.

*Ĕçхалăхĕ Комуниссен парттипе Совет влаçĕ тавра çирĕпрех ђăмăртанни, хамăр çĕршыва тăшмансем тапăнасран сыхлас ĕç çине хытăрах пăхни,—Совет Сойусне хирĕç хатĕрлекен вăрçă хăрушăлăхĕн хăватне хавшатать.*

Ĕлĕк Анкли правиттĕлствин йут патшалăхсемпе ĕç тăвакан министăрĕ, Керсон Анкли пирĕн Совет Сойусне вăрçăпа тапăнать, тесе хăратса улттиматтăм йанăђђĕ. Анђах пирĕн ĕçхалăхĕ хăраса ўкмерĕ, хăрас вырăнне

«Уђттиматтăм“ йатлă ескатрили (йеропласен ротти) тума пĕтĕм Совет Сойусĕ тăрăх укçа пуха пуçларĕç, кайран сывлăш флођĕн тусĕсен опђĕстви те пулђĕ. Ун хыççăн ђасах Топрохим йатлă опђĕствă ђăмăртанђĕ. Унтан вара çав икĕ орканисатси, хăйсен ђленĕсене 2 мĕлйуна çитерсе, пĕрлешсе, Авиахим йатлă пĕр опђĕствă турĕç. Авиахимпа ун умĕнхи опђĕствăсем ĕçхалăхĕ панă укçапа 161 йероплан тутарнă, 20 айеротром (йеропласем вĕçсе хăпарса анмалли вырăнсем) тата авиатсипе хими лапоратторисем тунă.

Хамăр çĕршыва çӳлтен йеропласемпе тапăнасран сыхлас тĕлĕшпе Авиахим халăх хушшинђе нумай ĕçсем тунă, мĕнле сыхланмалли çинђен ăнлантарнă, хаљ вăл ĕçе тата вăйлăлатнă. Уђрештенисенђе, ђукун çулсем çинђе, хуласенђе халĕ авиахим комантисем пур, крушоксем йалсенђе те, хуласенђе те пур, вĕсем пурте хамăр çĕршыва тăшмансем çӳлтен йеропласемпе тапăнасран сыхлас ĕçе вĕренеççĕ.

Унсăр пуçне Авиахим авиатсипе хими промышлĕннăçне, тата йалхуçайствине вăйлăлатас ĕçре те нумай пулăшу кăтартнă.

Тырпул акмалли çĕрсене тутăлантарас ĕçе халăх хушшине сарас тесе, Авиахим 7000 кăтартмалли уђаскăсем тунă. Пысăк шывсем, таврари çĕрсем çинђи саранђђасене пĕтерме Авиахим 1926-мĕш çулта йеропплансемпе експетитсисем туса кайса, 10.000 теçеттин çинђи саранђђасене пĕтернĕ, вăрмансене сийен тăвакансенђен 700 теçеттин вăрман тасатнă.

Çавна кура Авиахим орканисатсийĕсене вырăнсенђе хресђенсем пит ырлаççĕ, çавăнпа Авиахим малашне хресђенсене темиçе çĕршер пинĕн ђлена кӳртме пултарĕ. Хресђенсем унта мĕн ђухлĕ нумайрах пулĕç, çавăн ђухлĕ пирĕн хамăр çĕршыва тăшмансенђен сыхлас ĕç вăйлăлансах пырĕ.

Авиахимпе пĕрле 1926 çулта ОСО йатлă орканисатси (Совет Сойусне сыхлама пулăшакан Опђĕства) ĕçле пуçларĕ. Кĕске вăхăтра ОСО орканисатсине 300.000 ĕççынни ђлена кĕђĕç. Халĕ, Авиахимăн сйесĕ тата ОСО тĕп совеђĕн пленăмĕ йышăннă постановленисем тăрăх, Авиахимпе ОСО пĕрлешсе, Осоавиахим йатлă пĕр опђĕства турĕç. Çапла тунипе вара çав икĕ опђĕства пĕр ĕçех

кашни харпăр хăй тĕллĕн туса пырас йĕрке пĕтрĕ, ĕçхалăхĕн укçине пĕр çĕре пухма май килђĕ.

Анђах пирĕн тăшмансем вăрçа мĕнле хатĕрленнине аса илсен, Осоавиахимпе ун умĕнхи опђĕствăсем тунă утăмсем çителĕклех мар. Пирĕн 150 мĕлйун халăхлă аслă çĕршывшăн Осоавиахимри 2.300.000 ђлен пит сахал. Осоавиахимре малашне 10-шар мĕлйун ђлен пулмалла.

Авиахим комантисене, крушокĕсене халђхинђен темиçе хут нумайлатмалла. Çавна тума вăрçă хăрушăлăхĕ хушаť.

Кам канăçлă, лăпкă пурăнас тет, кам Совет Сойусне тăшмансенђен сыхлас тет—çавсен пурин те—Осоавиахим ђленĕ пулмалла

## Пирĕн хими промышлĕннăçĕ.

Хими промышлĕннăçĕ йенђен те епĕр халĕ ђылай малалла кайнă. Вăл йенђен патша Раççейĕ Йевроппăри пур патшалăхсенђен те кайра пырађђĕ. çапах епĕр хими йенђен вăçăђђенхи вăхăтран такçанах иртсе кайса, çĕнĕ пысăк хими савăђĕсем лартма пуçларăрăмăр. Вăл савăтсене халĕхалăх хуçайствине,

йалхуçайствине кирлĕшĕн лартаççĕ, анђах вăрçă пуçлансан, вăл савăтсем вăрçăшăн та ĕçлеме пултараççĕ. Çак канăç вăхăтĕнђе епĕр хими çинђен вĕрентекен вăтам тата аслă çĕнĕ шкулсем уçрăмăр. Вĕсем, вăрçă пуçлансан, пурте хамăр çĕршыва тăшмансенђен сыхлас ĕçе пуçăнĕç. Çав шкулсем тĕрлĕ кассенђен сыхланмалли проттивокас шухăшласа кăларнă, вăл кашни хĕрлĕ салтак аллинђех пур. Проттивокассем тăвас ĕç çулсереренех ӳссе пырать, малашне вăрçă пулас пулсан, епĕр вĕсене патшалăхри мĕн пур çынсене çитмеллĕх хатĕрлесшĕн. Анђах кунта хими çинђен тĕпĕ-йĕррипех çырма çук, мĕншĕн тесен вăл ĕç—тăшмансене пĕлтермелле мар ĕç. Кашни ĕçхалăхĕн акă çакна пĕлмелле: пирĕн хими йенђен тăшмантан сыхланмалли тĕрлĕ ăслайсем пур, ун çинђен тăшмансем те, никам та пĕлмеççĕ, анђах ĕçхалăхне тăшмансенђен кирлĕ вăхăтра упраса тăмашкăн Совет Сойусĕн хими промышлĕннăçĕ шутсăрах тăрăшать.

### Совет Сойусĕн тинĕс çинђи флођĕ.

Совет Сойусĕн тинĕс флођĕ те нађар мар. Тинĕссем йенђен тăшмансем тапăнасран

вăл Совет Сойусне лайăхах сыхлама пултараť. Пирĕн Палтти тинĕспе Хура тинĕс çинђи флотсем карапсен шуђĕ йенђен те, вăрçă хатĕрĕ йенђен те ђи вăйлă флотсем. Финљантин, Латвин, Естоњин тата Пољшăн Палтти тинĕс çинђи флођĕсене пурне те пĕрле илсен те 12.000 тоннă анђах, пирĕн унта 111.000 тоннă. Хура тинĕс çинђи флотсем: Румыњин—6.000 тоннă. Туртсин—24000, пирĕн Совет Сойусĕн—28.000.

Халĕ пирĕн вăрçă карапĕсене çĕнетесси, çĕнĕрен тăвасси ăнăçлă, тĕрĕс пулса пыраť. Флота йеропланcемпе çӳлтен тапăнасран сыхлас ĕç ăнса пыраť. Флотри матроссен йышĕнђе 29,39% рапођђисем, 60,47% хресђенсем, вĕсем вăрçă ĕçне планлă вĕренсе пурăнаççĕ. Ţинĕс çинђе кашни çулсеренех пулакан маневрăсем пирĕн флот вăрçа хатĕррине пĕлтереççĕ.

Флотри матроссен йышне ӳстерес ĕçре комсомол пит пысăк усă кăтартрĕ, комсомол флота 1922-мĕш çулта шефа илђĕ, халĕ тинĕс флотĕнђе комсомолĕссем 10.000 çитеççĕ. Тинĕс флотне ваљђи командирсем хатĕрлекен шкулсем, тата Тинĕсри Çар

Аккатемийĕ пире пит лайăх вĕренсе тухнă командирсем, тĕрлĕ спетсиалиссем, иншенерсем парса тăраççĕ.

Çарпа тинĕс ĕçĕсен Халăх Комиссариаҫĕ Республĕксен Сойусĕнҫи Советсен 4-мĕш Сйесне çырса панă отҫотра каланă пек, тинĕс флоҫĕ республĕке сыхлас ĕçре пит кирлĕ йапала, ăна вăйлăлатма вăхăт та, укçа та нумай кирлĕ.

Çапах та пирĕн тинĕс флоҫĕ халĕ тăшмансен пире тинĕс йенҫен тапăнас çулне картлама пултарат.

### Пирĕн çар промышлĕннăçĕ.

Тăшмансем пире тапăнас шухăш тытсан, пирĕн Хĕрлĕ çарăн хамăр çĕршыва сыхлама вăрçă хатĕрĕсем çителĕклĕ пуррине вулакансем курҫĕç. Пирĕн мăннисемпе пĕҫĕк тупăсем,—проневиксем, хими касăсем, сапперсем тата ҫукунçул çарĕсем тăшмансеннинҫен пĕртте кайа мар.

Пирĕн çар промышлĕннăçĕ йулашки çулсенҫе ҫылай ӳсрĕ: кивĕ савăтсене халҫхи самана кирлĕ пек туса лартнă, тата çĕнĕ савăтсем те нумай тунă, çавăнпа та вăрçă пулас мĕн пулсан, пирĕн çар промышлĕннăçĕ Хĕрлĕ çара кирлĕ

вăхăтра вăрçă хатĕрĕсем çителĕклĕ парса тăма пултарать. Анђах Хĕрлĕ çар тăшманпа ăнăçлă çапăçасси çар промышлĕннăçĕнђен кăна килмест. Тĕнђери ђи пуйан патшалăхсене илсен, вĕсем те хăйсен çапăçакан çарĕсене çар промышлĕннăçĕпе анђах тытса усрама пултараймаççĕ. Çар тăшмансемпе ăнăçлă çапăçасси, вĕсене çĕнтересси пĕтĕм патшалăхри халăх хуçайстви вăйлинђен килет.

Акă ĕнтĕ мĕншĕн кирлĕ хамăр патшалăхри промышлĕннăçа вăйлатасси, вăйлă интустриллĕ тăвасси. Çав çулпа пырса епĕр мĕн ђул пысăк ăнăçлă утăмсем тăвăпăр, çавăн ђухлĕ Хĕрлĕ çара тăшмансемпе кĕрешме нумайрах пулăшу парăпăр.

Мĕнле пыраțши пирĕн хамăр патшалăха вăйлă интустриллĕ тăвас ĕç?

Пирĕн Совет Сойусĕнђе халĕ ĕлĕкхи кивĕ савăтсене йусаса çитерне, вĕсем ĕçлеççĕ, çĕнĕрен лартнă савăтсем те ĕçлеççĕ. Уралта, Украйнăра тимĕр шăратакан çĕнĕ пысăк савăтсем тума пуçанă. Сталинкратра (ĕлĕкхи Ђаритсăнра) трактăрсем тăвакан савăт, Тон çинђи Ростăвра тата Ленинкратра — тĕрлĕ машшинсем тăвакан савăтсем лартаççĕ.

Çав вăхăтрах пирĕн правиттĕлства нефтă, çĕркăмрăкĕ, тимĕр кăларас ĕçе вăйлăлатма, лайăхлатма та пуçăннă, мĕншĕн тесен вĕсем çителĕклĕ пулмасан, пирĕн савăтсем пĕр ђарăнмасăр ĕçлеме пултараймаççĕ. Çĕнĕ електритсă стантсисем те халĕ нумай лартаççĕ, вĕсем промышлĕннăçа та, йалхуçайствине те вăйлăлатас ĕçе йўнеçтерме пултараççĕ. Пур шултăра савăтсем те, çĕнĕрен тунисем те, халăх хуçайствине вăйлăлатасшăн, ђасрах сотсиалисăм пурнăçĕ патне çитересшĕн ĕçлеççĕ, пулас çĕнĕ савăтсем те çавăншăнах ĕçлĕç, анђах тăшмансем пире тапăнсан, тимĕр шăратакан савăтсем тăшмана хирĕç тăма тупăсем, пăшалсем, снаретсем тума пуçлĕç; трактăр савăђĕсем—танккăсем, хими савăђĕсем тĕрлĕрен кассем хатĕрлеме тытăнĕç.

Çавăнпа та кашни йусанă савăт, кашни çĕнĕрен лартнă савăт промышлĕннăçпа йалхуçайствине анђах мар, Хĕрлĕ çара та вăйлăлататĭ.

Пирĕн промышлĕннăçа вăрçă ваљљи ĕçлеттерме кăпиталисăмлă патшалăхсенђен çăмăлтарах, мĕншĕн тесен пирĕн промышлĕннăç патшалăх аллинђе, патшалăха кирлĕ вăхăтра

вăл ђасах вăрçă хатĕрĕсене тăвас ĕç çине куçма пултарать. Кăпиталисăмлă патшалăхсенђи промышлĕннăç ун пек мар, вĕсенђи промышлĕннăç темиçе кăпиталис аллисенђе, вĕсен савăђĕсенђе вăрçа кирлĕ йапаласене патшалăхран укçа памасăр ђасах хатĕрлеттереймĕн. Унсăр пуçне тата, кăпиталисăмлă патшалăхсем пире вăрçăпа тапăнас тесен, унти хапрăксавăтсенђи рапођђисем вăрça хирĕç пăлханма пуçласси çине шансах тăмалла, вĕсем пире тапăнмалли вăрçă хатĕрĕсене тăвас çук.

Пирĕн рапођђи клас Совет влаçне тăшмансенђен сыхлама пĕр çын пек сиксе тăрать. Çавăнпа та пирĕншĕн нимĕнле тăшман та хăрушă мар.

**Хамăр çĕршыва сыхлас ĕçре Советсем, вывăнти тĕрлĕ орканисатсисем тата ĕçхалăхĕ мĕн тума пултараççĕ?**

Пролеттариат тиктаттурĕшĕн хресђенсем йенђен хăрушăлăх пур тесе лапăртатаççĕ хăшĕ. Анђах рапођђисемпе хресђенсен пĕрлешӳвĕ çирĕппи пирĕншĕн паллă, çав пĕрлешӳве тата ытларах çирĕплетсе çитересси никамран ытла советсенђен килет.

Хамăр çĕршыва тăшмансенҕен сыхлас ĕçре советсем пит паллă вырăнта тăраççĕ. Кăпиталисăмлă патшалăхсенҕи влаç оркăнĕсем ĕçхалăхĕнҕен айакра тăраççĕ, вĕсем ĕçхалĕхĕн пурнăçне лайăхлатасшăн хыпмаççĕ, ăна пусмăрлама анҕах пĕлеççĕ. Пуршуаçи патшалăхĕсенҕе харпăр хăй çĕршывне тăшмансенҕен сыхлас ĕç вăрттăн пулса пыраť. Пирĕн влаç оркăнĕсем ĕçхалăхĕ хăй суйласа лартнă çынсенҕен пулаççĕ, çавăнпа та патшалăх инттересĕсемпе ĕçхалăх инттересĕсем пĕр пекех, çак йенҕен пăхсан, пирĕн патшалăх тĕнҕере пĕртен пĕр патшалăх.

Пулас вăрçăра хĕçпăшаллă çар анҕах мар, пĕтĕм патшалăх вăрçă ĕçĕнҕе пулмалла. Ун ҕухне фронтпа тыл хушшинҕе нимĕнле ăрасналлăх та пулас çук. Çĕршыва сыхлас ĕçре малашне кашни хулан, кашни йалăн, кашни хапрăк-савăтăн, кашни ĕççыннин йерес пулаť, мĕншĕн тесен вĕсем: тăшман пирĕн пата çитех килеймĕха, тесе нихăш те калама пултараймаççĕ: тăшман йероплансемпе вĕçсе килсе хуласене те, йалсене те, хапрăк-савăтсене те çĕмĕрме пултарĕ. Пулас вăрçăра çар анҕах кĕрешни—вăл тăшманшăн пит хăрушах

мар, пĕтĕм ĕçхалăхĕ, пĕтĕм халăх хуçайстви вăрçă ĕçĕпе пит çирĕп çыхăнса тăни, çара кирлĕ йапаласене вăхăтра хатĕрлесе тăни— тăшманшăн тата хăрушăрах. Ђукунçулсем, тимĕр шăратакан савăтсем, хими т. ыт. савăтсем, хапрăксем лайăх ĕçленинђен, çĕркăмрăкĕпе нефтă вăхăтра хатĕрлесе, вĕсене ăçта кирлĕ çĕре вăхăтра çитерсе тăнинђен вăрçă ăнăçлăхĕ килет.

Акă ĕнтĕ ăçтан пуçланаççĕ советсен çĕршыва сыхлас сатађĕсем. Промышлĕннăçпа транспăрта тата йалхуçайствине вăйлăлатмалли майсем советсен пур йенђен те тупма тăрăшас пулаť. Ку ĕçсем советсемшĕн çĕнĕ ĕçсем мар хуť, вĕсем халăх хуçайствине вăйлăлатас тĕлĕшпе ку таранђђен пĕрмайах ĕçлесе пынă. Анђах вăрçă хăрушăлăхĕ çывхарса пынă майĕпе, советсен халăх хуçайствине тата ытларах вăйлăлатма, лайăхлатма тăрăшас пулаť.

Йалхуçайствине вăйлăлатас ĕç советсен ку таранђђенех йаланхи ĕçĕ пулнă пулсан, вăл ĕçе халĕ тата ытларах вăйлăлатмалла. Советсен хаљхи вăхăтра ытларах та, лайăхрах та ĕçлемелле, вĕсен халĕ нихçанхинђен

ытла хресђенсене çывăх тăмалла. Хресђенсем советсене мĕн ђул ытларах йуратĕç, çавăн ђухлĕ вĕсем хамăр çĕршыва тăшмансем тапăнасран лайăхрах сыхлĕç.

## Лашасем ĕрђетес ĕç.

Кунта епĕр советсем тырпулсене куђтурлантарас, çĕртен тырăпулă нумайрах илесси йенђен мĕн мĕн тумаллине асăнмăпăр. Пирĕн çĕрĕç патшалăхĕнђе вăл йенђен мĕн мĕн тăвасси ахалех паллă. Кунта пирĕн ђи малтан советсен лашасем ĕрђетес йенђен мĕн мĕн тумалли çинђен калас пулаť. Патша вăрçиђђен пирĕн патшалăхра 35 мĕлйун лаша пулнă. Вăрçăсем 10 мĕлйун лаша çăтса йађĕç. Пирĕн патшалăхра ђукунçулсем йăвă марри, автомашшинсем сахалли, вăрçăра кирлĕ йапаласене ирĕксĕрех лавсем çине тийеттерет. Çавăнпа та лашасем ĕрђетес ĕç çине Советсен пит хытă пăхас пулаť.

Йуланутпа çўремелли лашасене ĕрђетес ĕçе акă мĕн ђарса тăраť: 1) хресђенсен укçа çитменни; 2) утланса çўремелли лашасем кўлме йурăхлă ђас пулайманни, çавăнпа хресђенсен кўлме, ĕçлеме ђас йурăхлă пулакан

ăратлă лашасем тытас пулаť, кусене тата илекенсем те нумай, утланса çўремелли (кĕске, çўллĕ) лашасене илекенсем сахал.

Советсен утланса çўремелли лашасене ĕрђетекен йулташлăхĕсене, тата уйрăм хуçайствăсене пулăшас пулаť, мĕншĕн тесен вĕсем, нихăçанхинђен ытла пулас вăрçăра, патшалăха пит пысăк усă пама пултараççĕ. Советсен puринђен ытла çав утланса çўремелли лашасене ĕрђетекен копператсийе вăйлăлатма пулăшас пулаť. Совет оркăнĕсен хресђен пуçартăвĕсене пўлсе тăмалла мар, вĕсене пур йенђен те ырласа, çул кăтартса пымалла. Çĕр управленисен ăратлă ăйăр вити пур. Çав ăйăрсене çĕр управленисен (йе çĕр пайĕсен), кĕсресене йерттерес вăхăтра, ђи малтан лашасем ĕрђетекен йулташлăхсене парас пулаť. Йалсоветђĕсен (ĕçтăвкомсен), вулĕçтăвкомсен (районĕçтăвкомсен) хресђенсене хăйсен лашисене лайăх ăратлă тăвасси çинђен пленăмсенђе, çеççисенђе, пухусенђе каласа ăнлантарас пулаť. Йалсоветђĕсен (йалĕçтăвкомсен), вулĕçтăвкомсен (районĕçтăвкомсен) ăратлă ăйăрсем пулсан.

вěсене ăçта кирлě вырăнсенђе усрас пулаť, кирлě мар вырăнсенђе (районсенђе) усрамалла мар.

Унтан тата çак çўлте асăннă совет оркăнěсен çав лашасем ěрђетекен оркăнсене йалхуçайстви копператсийě урлă укçа кивçен илме пулăшас пулаť.

Ăратлă лашасемшěн налук илмелле марри çинђен пирěн йури йышăннă постановлени пур. Вырăнти Совет оркăнěсем çав постановленирен пăрăнмалла мар. Халě пирěн вулěçтăвкомсен (райěçтăвкомсен) ăратлă ăйăрсем, лайăх лашасем ěрђетсе ўстерекен хресђенсене премисем памалли фонгсем пур. Çав фонтсенђен премисем кама, měншěн, тěрěс, йе тěрěс мар панине вырăнти Совет оркăнěсен лайăх асăрхаса тăмалла.

### Ытти выљăхђěрлěх ěрђетес ěç.

Советсен Хěрлě çара тăрантармалли ытти ăслайсем çинђен те шухăшлас пулаť. Йаппуњ вăрçипе 1914—18-měш çулсенђе пулнă тěнђе вăрçи, çар ăнăçлă çапăçасси ăна тăранма кирлě çимěçсене вăхăтра парса тăғинђен килнине астутараççě. Çара тăрантарма кирлě йапаласем вěсем çăкăр хыççăн—какайпа çу пулаççě.

Тĕнҫе вăрҫинҫе епĕр хамăр ҫара тăрантарма мăйракаллă шултăра выҫăхсем нумай пусса пĕтертĕмĕр, ҫавăн хыҫҫăн вара хресҫен хуҫайствисем ҫасах наҫарлана пуҫларĕҫ, мĕншĕн тесен мăйракаллă шултăра выҫăхсенҫен усă курмалла пулаҫҫен, вĕсене нумай ҫул тăрантарса усрас пулаť. Ҫавăнпа та, Хĕрлĕ ҫара пулас вăрҫăра какай-ҫу парса тăрас ĕҫшĕн хресҫен хуҫайствине те йухăнтармалла мар, Хĕрлĕ ҫара та какай-ҫу тавраш вăхăтра парса тăмалла тăвас пулаť. Вăл йенҫен пирĕн пусма ҫас йурăхлă пулакан выҫăхҫĕрлĕхсене ĕрҫетесси ҫинҫен шухăшлас пулаť. Ун пек выҫăхсем—пусма ҫас йурăхлă пулакан, ҫас ўсекен сыснасемпе сурăхсем пулма пултараҫҫĕ, сыснасем ҫар ваҫҫи какай, тата (сысна ҫăвĕ), сурăхсем какай, тата ҫăм пама пултараҫҫĕ; сурăх ҫăмĕнҫен ҫар ваҫҫи шенелсемпе кимнаҫторккăсем тума пулаť.

Сысна пĕрре ҫăвăрласа 1·5—16 ҫăвăр пама пултараť, вăл ҫулталăкра иккĕ ҫăвăрласа 25—30 ҫăвăр та пама пултараť, вĕсене вара 4—5 уйăхран ҫĕртме те хупма пулаť.

Лайăх ăратран пулнă сурăх та пусма ҫас йурăхлă пулаť, ăна 6—7 уйăхран пусса ҫар ваҫҫи какай тума пулаť.

Çавăнпа та советсен çав икĕ тĕрлĕ выдăхсене ĕрдетме майсем шырас пулаť. Çав вăхăтрах тата çакна та манмалла мар: выдăхдĕрлĕхсем йышлă районсендe тĕрлĕ выдăх дирĕсем те сарăлма пултараççĕ, çавăнпа та вăл районсене выдăх тухтăрĕсем нумайрах йарасси—советсен сатадĕ пулмалла. Советсен вырăнти акраномсемпе пĕрле кĕтӳсендe лайăх ăратлă выдăхсем çӳреттерме тăрăшас пулаť.

Çак ĕçсем вĕсем, Совет Сойусне тăшмансем тапăнсан, Хĕрлĕ çар вадди кирлĕ çимĕçсене хатĕрлес ĕçе ăнтарма пултараççĕ.

## Пулă тытас ĕç.

Хамăр çĕршыва тăшмансендeн сыхлас ĕçре пулă тытас ĕç те нумай усă кăтартма пултараť. Пулă тытас йендeн ирĕн кашни республĕкĕн, кашни кĕпĕрнен харпăр хăйĕн правĕлĕсем пур. Пулă саппасĕсем пĕтсе ан пыддăр, ӳссе пыддăр, çар вадди çимĕç ытларах паддăр тесен, çав правĕлсĕне пит хытă уйас пулаť. Вырăнти влаç оркăнĕсен пулă ĕрдетекен шывсене лайăх асăрхас пулаť. Пулă тытас ĕçре правĕлăран иртме йурамасť: пулă

саппасне пĕтерес мар тесе, правĕлăра пулă хăш вăхăтра пуçласа хăçанђђен тытмаллипе, тытма йураманни çинђен лайăх кăтартса панă. Пысăк шывсем, тинĕссем çывăхĕнђи пирĕн пулă тытас ĕçе тăвакан трестсем пур, вăрçă пуçлансан вĕсем, патшалăх хушнипе, ђасах çар вађђи ĕçлеме пуçлĕç.

Унта тата советсен умĕнђе пĕђĕк шывсенђе (пĕве, кÿлĕсенђе) пулăсем ĕрђетес сатађсем пулмалла. Пирĕн кашни йалтах тенĕ пекех уйрăм хуçайствăсен ђылай пысăк пĕвесемех пур, вĕсемсĕр пуçне тата хысна тутарнă аслă пĕвесем те ђылай пур, вĕсенђе пуринђе те пулăсем ĕрђетме пулаť. Анђах унђђен вĕсене тасатас, тарăнлатас пулаť. Ăна тума укçа кирлĕ, укçа хыснаран ертеле илме çăмăлтарах. Çав пулă тытмалли шыв-шурсене тасатмалли ертелсене ăçта, мĕнле тумалли çинђен советсен хресђенсене каласа ăнлантарас пулаť. Вăл ĕçе пĕлекен спетсиалиссем те хресђенсене ăслайсем кăтартса тама пултараççĕ.

**Сатпахђисем ĕрђетес, пахђа çимĕç ÿстерес ĕç.**

Ку тĕлĕшрен Советсен пит пикенсе ĕçлес пулаť. Патша вăрçи умĕн хресђен хуçайстви-

сенҫе сатпахҫисем ёрҫетес, пахҫаçимĕç ўстерес ĕç вăйлăланса кайрĕ. Çав çимĕçсене типĕтмелли, вĕсенҫен конçервăсем т. ыт. йапаласем тумалли савăтсем те нумай лартнăҫҫĕ, тĕнҫе вăрçипе краштăн вăрçи вăхăтĕнҫе вăл савăтсем тата аслăланҫĕç, 1922-мĕш çул çитнĕ çĕре вĕсем 2 мĕлйун пăт пахҫаçимĕç хатĕрлесе, хĕрлĕ салтаксене кирлĕ çимĕçсем парса тăҫĕç. Халĕ пахҫаçимĕçсене типĕтес ĕç пит наҫар пыраҭ, мĕншĕн тесен типĕтнĕ пахҫа çимĕç илекенсем çук. Анҫах Хĕрлĕ çар ваљҫи типĕтмен пахҫаçимĕç хатĕрлеме йурамасҭ, типĕтменнисем вĕсем ҫасах пăсăлаççĕ. Пахҫаçимĕçре „виттаминсем пур, çав виттаминсемсĕр“ çын ҫирлесе кайма, нимрен ытла „ҫынкăпа“ ҫирлеме пултараҭ. Çавăнпа та малашне пахҫаçимĕçсене типĕтес ĕçе ура çине тăратни Хĕрлĕ çаршăн пит кирлĕ.

Сатпахҫисене, çимĕç пахҫисене çĕрсем касса парса аслăлатасси, вĕсенҫен тĕрлĕ çимĕçсем нумайрах илмелле тăвасси — Советсен тĕп сатаҫĕ.

**Çарансене лейăхлатас, утă нумайрах тăвас ĕç.**

Утă нумаййи вăрçăра пит паха йапала, вăл пуриншĕн те паллă. Епĕр çарансем çинђен курăк çулса илетпĕр те, ĕçĕ те пĕтрĕ,— çарансене хăйсене нимĕн те памастпăр. Унсăр пуçне тата хресђенсем нумайĕшĕ çарансене вăхăтра çулмаççĕ. Çарансем лайăх пуласси, унта кĕтӳсене вăхăта пĕлсе çӳретнинђен килет. Кĕтӳсене çарансем çине çĕршыв типнĕ типменех кĕртсе йани мĕнле сийен тунине хресђенсем пĕлмеççĕ.

Вырăнти влаç оркăнĕсен, акрономсене ђĕнсе, çавăн çинђен хресђенсене каласа ăнлантармалла. Çарансене тăруках валеçтерме ирĕк парас пулмасť, вĕсене вăхăтра çултарас пулаť. Çарансене йĕркелемен пулсан, вăл ĕçе вăраха йамалла мар, усал курăксем пуснă çарансене тасаťтарас пулаť, мĕншĕн тесен тасатнă пĕр кектар çаран çинђе лайăх утă йаланах 500—600 кило ытларах тухаť.

Унсăр пуçне тата клевĕр, шурути, тата çавăн пек сĕткенлĕ ытти курăксем нумайрах акма çулсем кăтартса парас пулаť. Вăл тĕлĕшрен мелиоратси йулташлăхĕсем тунине нимĕн

те çитмест, вĕсем çарансене лайăхлатма кивçен укçа та, курăк вăррисем те илме пултараççĕ. Çак çӳлте каланă ĕçсене тума вырăнти советсен хресЂенсене пур йенЂен те пулăшас пулаť.

### Çулсене, кĕперсене çирĕплетес ĕç.

Ку ĕç советсемшĕн те, ĕçхалăхшĕн те пит паллă ĕç. Йалти хресЂенсем хăйсен çулĕсем тăрăх кулленех çӳреççĕ пулин те, вĕсене çирĕплетесси, йусасси çинЂен нумайах шухăшламаççĕ, лашасем кĕрсе ларас, урапасем тӳнсе кайас вĕçне çитсен тин вара çула йусас ĕçе ирĕксĕрех пуçăнаççĕ. Çулсем çине çавăн пек пăхас йăла вăл ĕлĕкренпех пыраť.

АнЂах йусав çулсем, нимрен ытла йусав кĕперсем—çĕршыва тăшмансенЂен сыхлас ĕçре пит пысăк усă кăтартма пултараççĕ. Çулсене, кĕперсене çирĕплетме кашни йалăнах пуçăнмалла. Вăрçă ĕçĕшĕн çулсемпе кĕперсем йусавви сахал, кашни çулсем тăрăх икĕ йенĕпе йăвăççем лартса тухни темиçе пин хĕрлĕ салтаксене, темçе çĕр выЂăх Ђĕрлĕхсене вилĕмрен хăтарма пултараť. Çарсем çулсем

тăрăх çӳреççĕ, тăшман вĕсем çине йероплансемпе килсе, помпăсем пăрахса, вĕсене вĕлерме, нумайĕшне амантма пултарать. Икĕ йенпе йăвăçлă çулсем тăрăх пыракансене тăшман асăрхамасть.

Пĕр тапхăртах пур çулсене те йусаса пĕтереймĕн, вăл ĕçе планпа туса пымалла, ђи малтан аслă (мăн) çулсене йусамалла.

Вырăнти советсен Осоавиахим йађейккисемпе пĕрле хăш çулсене маларах, хăшсене кайарах йусасси çинђен сӳтсе йавмалла.

### Ђукунçулсемпе телефон йуписене сыхласси — халăх ĕçĕ.

Хаљхи саманара вăрçăра ђукунçулсăр, телефонсăр нимĕн те тума çук. Ђукунçулсемпе телефон пралукĕсен йусавĕнђен çар тăшманпа ăнăçлă çапăçасси килет. Ăна пирĕн тăшмансем те шута илеççĕ, çавăнпа та вĕсем вăрçăшăн ђи кирлĕ ђукунçулсене, пысăк шывсем урлă хывнă тимĕр кĕперсене, телефон, телеграф йуписене ђи малтан çĕмĕрме хăтланĕç.

Тăшмансем вĕсене фронт çывăхĕнђисене анђах мар, патшалăх варăнђисене (тылрисене) те çĕмĕрес темелле, мĕншĕн тесен фронт тылсăр пурăнма пултараймасть. Фронта мĕн

кирлине телекраф тăрăх пĕлтересçĕ те, ђукунçулсем тăрăх турттарса кайаççĕ, çавăнпа та тăшмансем ђукунçулсене патшалăх талкăшĕпех тапăнасшăн пулĕç.

Паллах, ђукунçулсемпе телекраф йуписене пурне те çар вăйĕпе сыхлама май çук, çитменнине тата вĕсем пирĕн Совет Сойусĕнђе темиçе пиншер çухрăм ђăсăлса выртаççĕ. Çавăнпа вĕсене сыхласси—халăх ĕçĕ.

Халăх ђукунçулсене, телекраф, телефон йуписене мĕнле сыхлама пултарĕши? Ђукунçулсем хĕррине пĕтĕм халăх сиксе тухсан та, вĕсене сыхласси йăвăр, тăшман пусмалли пушă вырăнсем çапах нумай пулнă пулĕђђĕç. Халăхăн нимрен ытла ђукунçул çывăхĕнђи районсенђе тăшмансем майлă çынсене пуррипе çуккине пĕлме тăрăшас пулаť. Шанђăксăр çынсем курăна пуçласан, вĕсене влаççен аллине тытса парас пулаť.

**Пантитсемпе, шпионсемпе кĕрешес ĕç.**

Пантитсемпе шпионсене тăшман пирĕн çĕршывăн ђиккисем урлă кунталла тем тĕрлĕ ăслайсемпе те каçарса йама пултараť. Çав пантăсем пирĕн хушăмăрта тĕрлĕ суйа сăмахсем сарассинђен пуçне, тĕрлĕ тĕттĕм

йалсенђи совет оркăнĕсене тапăнас тейĕç, вырăнти влаçĕн йатне çĕртме тăрăшĕç. Ун пек йапаласене епĕр иртнĕ 10 çул хушшинђе пайтах илтнĕ те, курнă та, епĕр вĕсене нумай тыта тыта „леш тĕнђене“ йанă. Епĕр халĕ те вĕсене хирĕç тăма хатĕр. Анђах халĕ пантитсемпе кĕрешес ĕçе ĕлĕкхинђен те вăйлăлатмалла.

Вăл ĕçе ĕлĕк те, халĕ те Патшалăхăн Политтĕк Управленийĕпе Хĕрлĕ çар пайĕсем туса пыраççĕ. Анђах çав пантитсене, шпионсене тытас ĕçре халăх пит пысăк пулăшу пама пултарать.

Пантитсем, шпионсем хыççăн отретсем патшалăх талккăшĕпех хăваласа çӱреме пултараймаççĕ. Пантитсем ăçта çӱренисене вырăнти халăх пĕлмесĕр тăма пултараймасть, вăл ăна пĕлетех. Çавăнпа та вĕсене вырăнти (йалсенђи) хресђенсенђен ытла никам та лайăх асăрхас çук.

Апла пулсан, хресђенсем вăл йенђен мĕнле пулăшу парĕçши?

Пантитсемпе шпионсем курăна пуçласанах вĕсем çинђен ăçта, кама пĕлтермеллине çийĕнђах пĕлтерес пулать. Хĕрлĕ çарăн вырăнти

пайӗсем пур районсенҫе те пантитсемпе шпионсене хирӗҫ тӑма хатӗр. Ун пек пайсем ҫук ҫӗрте Осоавиахимӑн пантитсемпе шпионсене тытас ӗҫе хӑйсен ҫине илмелле.

Епӗр кунта хамӑр ҫӗршыва тӑшмансенҫен сыхлас тесен камӑн мӗн тумаллине кӗскен анҫах асӑнтӑмӑр. Тӑшман пирӗншӗн хӑш йенҫен мӗнле суран тума пултарассине, советсем тӑшмансене хирӗҫ тӑрас ӗҫре мӗнле паллӑ вырӑнта тӑнине, вӗсем мӗн тума пултарассине пӗлтӗмӗр пулин те, пирӗн пурӑнӑҫра ҫӗнӗ ӗҫсем, кунта асӑнманнисем сиксе тухма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ку кӗнекере кӑтартса панӑ ӗҫсене—пӗртен пӗр ӗҫсем, вӑл ӗҫсене тусан ҫитет, темелли ҫук.

Нимрен ытла кирек хӑҫан та сыхӑ тӑрас пулать, пурӑнӑҫ кӑтартса панӑ ҫӗнӗ ӗҫсене шута илсе, вӗсене ҫӗршыва тӑшмансенҫен сыхлас ҫулпа туса пырас пулать.

Пулас вӑрҫӑ ӗнтӗ вӑл, халиҫҫен тӗнҫе илтмен-курман хӑрушӑ вӑрҫӑ пулать, уншӑн халӑх пурлӑхӗ те, ӗҫхалӑх хастарлӑхӗ те нихӑҫанхинҫен ытла кирлӗ пулать. Анҫах епӗр пурте ҫине тӑрса хатӗрленсен, мӗн тумаллине

çийĕнђех хатĕрлесе çитерсен, пулас вăрçă пирĕншĕн çĕнтерӳ вăрçи пулĕ.

**Пĕтĕм тĕнђери пролеттариат Совет Сойусĕ майлă.**

Тĕнђери пуршуаçи пирĕн çĕршыва мĕнле сăлтавпа тапăнассине епĕр пĕлетпĕр. Вĕсен сăлтавĕ акă мĕнле: „Пољшевиксем — вăрăхурахсем пирĕн çĕршыва, пирĕн патшалăхсен ђаплăхне пĕтересшĕн“, теççĕ вĕсем. Пупсем тата кăпиталисăмлă патшалăхсенђи çарсене „Çӳлти турă йађĕпе“ Хĕрлĕ çара хирĕç тăма, унпа вилес пек çапăçма ђĕнĕç.

Анђах Совет Сойусне хирĕç тăрас, Хĕрлĕ çарпа çапăçас ĕçре вĕсен ăнăçлăх пулас çук. Епĕр вăрçăшăн мар, килĕшӳллĕ пурăнасшăннине хамăр патшалăхри ĕçхалăхĕ анђах мар, йут патшалăхсенђи пролеттариат та шутсăрах лайăх пĕлсе тăраççĕ. Совет Сойусĕ йут патшалăхсене тапăнасшăн, тесе Румынђи салтакне те, Пољшă салтакне те каласа ĕнентереймĕн. Унтан тата пирĕн патшалăх тĕрĕслĕхĕ çинђен рапођђисемпе хресђенсем пĕтĕм тĕнђипех пĕлеççĕ, пуршуаçи Совет Сойусĕ çинђен суйнине ĕненекенсем йут

патшалăхсенђи ĕçхалăхĕ хушшинђе халĕ пулас та çук.

Пирĕн револђутси пур патшалăхсенђи ĕçхалăхĕн куçĕсене те уçрĕ, пирĕн майлă халĕ йут патшалăхсенђе темиçе çĕршер мĕлйун рапођђисемпе хресђенсем. Пуршуаçи хăйĕн патшалăхсенђи ĕçхалăхĕн револђутсиллĕ хусканувĕсене пусарас тесе, тем тĕрлĕ тискер ĕçсем те тăвать: ĕçхалăхне йертсе пыракан комуниссене, тата хастарлă рапођђисене йе çака çака вĕлерет, йе тĕрмене хупса выçăллă тутăллă усрать. Анђах рапођђисемпе хресђенсем пирĕн патшалăхăн хуçайстви вăйланса пынине, пирĕн мĕн пур ĕçсем ăнса пынине ђунтан-ђĕререн савăнса пăхса тăраççĕ.

Çав револђутсиллĕ рапођђисем, комуниссем йертсе пынипе, Хĕрлĕ çара пулăшма кирек хăçан та хатĕрри иртнĕ краштăн вăрçинђе курăнђĕ. Вăрçă вăхăтĕнђе Совет Раççейне сыхлама хатĕррине темиçе çĕршер пин рапођђи ĕçре кăтартрĕç.

Çавăнпа та епĕр „пирĕн тăшмансем хушшинђе пирĕн майлисем те нумай“ тесе тӳрех калама пултаратпăр. Ун çинђен каласа та

пĕтерейес çук. Çапах та пуршуаçи патшалăхсенђи хамăр тăвансем—пролеттарисем пире краштăн вăрçинђе мĕнле пулăшу кăтартнинеђи паллисене те пулин, аса илер.

## Франтси матросĕсем Отессăра пăлханса кайни.

1918-мĕш çулта Франтси респуплĕкĕн преçитенђĕ—Клеманссо Франтси çарĕпе тинĕс флотне Раççейĕн (халĕ Совет Сойусĕн) кăнтăрлари ђикки патне илсе килђĕ—„франтсуссен интересĕсене упрама“ пулаť ĕнтĕ.

Çурран полксенђен пĕриккĕшне Раççейĕн кăнтăрлари хулисене—Пираспољпе Херссона—вырăнаçтарнăђђĕ, çар карапĕсем—Отессă патĕнђе ђарăнса тăнăђђĕ.

Франтсус офитсерĕсем Отессăра ресторантан ресторана çӳресе майрасемпе асса пурăннă, салтакĕсем прахутсем, карапсем çине çĕркăмрăкĕ тийесе, унтан çар ĕçне вĕренсе тертленсе пурăннă. Килелле Франтсийе таварнасси çине шанса пурăннă салтаксемпе матроссен ĕмĕђĕсем пĕтнĕ: вĕсене темле пĕлмен вăрçа çавăрса кĕртнĕ.

Ун ђухне пољшевиксем шуррисене хытă хăвалаcа пынă, шуррисем тинĕс хĕрĕнђи хуласенђе пытанмалли вырăнсем шыранă, шурă çар кĕнĕралĕсемпе вĕсен аскăнђăклă майрисем, ђурисем Отессăна кĕрсен, Франтсус салтакĕсемпе матросĕсене çав анђăксене сыхлама хушнă.

Унђђен те пулмаст̆, пољшевиксем Отессăна туртса илеççĕ. Тинĕс çинђи карапсенђи франтсус салтакĕсемпе матросĕсем Отесса пољшевиксен аллине кĕнине пĕлмеççĕха. Анђах вĕсене, салтак вăййине вĕрентетпĕр тесе, карапсем çинђен тупăсенђен Отессă çине пеме хушаççĕ. Тупăсенђен вĕсем перессе пенĕ, анђах пĕрик хут персенех вĕсем, хăйсен кăмантирĕсем улталанине сиссе, пăлхав кăларса йанă.

Вăрçă карапĕсем çинђе револ̆утси пек пăлхавах пуçланса кайнă. Унђђен майрасемпе анђах асма пĕлнĕ комантирсем матроссем умне ђăркуçланса, хăйсен пурнăçĕсене сывă хăварма тархасла пуçланă. Матроссем карапсене хăйсен аллине илнĕ. Çав ĕçре çул кăтартса пыракан — Франтсири Комуниссен парттин ђленĕ Антре Мартти пулнă. Кайран вара

Франтсирен йанӑ мӗн пур салтаксемпе матроссем, хӑйсен карапӗсем ҫинђе „Интгернатсионал“ йурласа Раҫҫей хӗрлӗ салтакӗсемпе пӗрлешме Ҫевастоппӗле кайнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ ун ђухне Франтсин Раҫҫейе тапӑнас вӑрҫӑ планӗ йурӑхсӑра тухрӗ.

Клеманссон хӑйӗн ҫарӗпе тинӗс флотне кайалла ђӗнсе илмелле пулђӗ.

Франтси правиттӗлстви ҫавӑн ђухне пӑлханнӑ салтаксемпе матроссене темиҫешер ҫула тӗрмене хупса лартнӑ, хӑшӗсене вӗлернӗ. Анђах Франтсири рапођђисемпе хресђенсем вӗсене нихӑҫан та манас ҫук, халӗ те манмаҫҫӗ. Франтсири ӗҫхалӑхӗ Мартти йулташа тӗрмерен ҫӑлса кӑларса, ӑна Франтси парламӗнтне суйларӗ. Мартти хӑй парламӗнтра Франтсири пуршуаҫин вӑрҫӑ шухӑшӗсене хирӗҫ тӑрат.

## Пољшӑри рапођђисемпе хресђенсем Хӗрлӗ ҫара мӗнле пулӑшнӑ.

1920 ҫулӑн пуҫламӗшӗнђе Пољшӑ пире вӑрҫӑпа тапӑннӑђђӗ, ҫав ҫул пӗтиђђенех Пољӑшӑра вӑрҫа хирӗҫ темонстратсисем, пӑлхавсем, востанисем пулса пыђӗҫ.

Совет Раççейне тапăнакан Пољшă салтакĕсене ђарма Пољшăри комуниссен парттин хăйĕн пĕтĕм йышĕпе сиксе тухмалла пулнă.

1920-мĕш çулхи ийун уйăхĕнђе Пољшăри комуниссен парттийĕ саппасри салтаксене ђĕнсе каланă сăмахра акă мĕн çырнă:

„Алăрсене хĕçпăшал кĕрсен, е:ĕр револютсин саппас çарĕ пулатăр — çавна ан манăр. Çара кĕрсен, револютсиллĕ пăлхавсем пуçартма тăрăшăр. Раççей Хĕрлĕ çарĕпе ан çапăçăр, ун йенне куçăр“ тенĕ.

Ђăнах та çак сăмахсем çилпе вĕçсе кайман. Пољшă çарĕнђи нумай полксенђе пăлхавсем пуçланса кайнă. 14-мĕш çурран полкри салтаксем хăйсен офитсерĕсене пурне те вĕлерсе пĕтернĕ. Пракă йатлă хулари вăрçă хатĕрĕсен (снаретсен, кранатсен, помпăсен) склатне хурал тăракансем хăйсемех ђĕртсе йарса сиктернĕ.

Пољшă салтакĕсем фронтра вăрçă ĕçне хавшатса пы ă вăхăтра револютсиллĕ рапођђисемпе хресђенсем те çывăрман. Вĕсем Пољшă çарне кайалла ђакайми тăвас тесе,

Ђеханов йатлă хула патĕнђи ђукунçула пĕтĕмпех пăсса пăрахнă.

**Кермаңири рапођђисем Полђшăна илсе кайакан хĕçпăшалсене мĕнле ђарса тăнă.**

Пирĕнпе вăрçма 1920-мĕш çулта Полђшăна Франтси пит хытă пулăшнă. Тĕнђе вăрçи пĕтсен Кермаңи хуçайстви те, вăрçă хатĕрĕсем те Франтси аллине лекнĕ. Çавăнпа та Франтси Кермаңи урлă вăрçă хатĕрĕсене Полђшăна (пирĕнпе вăрçма) йанинђен тĕлĕнмелли çук. Анђах вăл вăхăтра Кермаңири рапођђисен хусканăвĕ пит вăйлă пынă, Кермаңире рапођђи клас пит вăйлă. Ун ђухне вĕсем Франтсирен Кермаңи урлă Полђшăна кайакан хĕçпăшаллă пойĕссене йе тӳнтерсе, йе çунтарса йарса, Полђшă çарне пирĕнпе вăрçма ђарса тăнă.

Пирĕн патшалăха кам та пулсан тапăнас шут тытсан, Кермаңири рапођђисем пирĕн çĕршыва, Совет Сойусне сыхлама пĕр çын пек сиксе тăрĕç. Ăна епĕр анђах мар, Кермаңири пуршуаçи те, ђунтан тарăхса та пулин калатех.

Кусем ĕнтĕ иртсе кайнă пултăр хуť.

Вĕсем 1918—1920—21-мĕш çулсенђе пулнă ĕçсем.

Анђах хаљхи вăхăт çине пăхсан, пире пулăшакансем йут патшалăхсенђе пурши?

Вĕсем Анклире те, Франтсире те, Керманљире те, Киттайра та, тата ытти патшалăхсенђе те—пур çĕрте те пур.

## Анклири пирĕн тăвансем.

1923-мĕш çулта Анкли правиттĕлстви пире тапăнма пуçланăђђĕ. Анкли правиттĕлствин тискер ĕçĕсене унти рапођђисем ђарђĕç. Вĕсем ун ђухне „Совет Раççейне тапăнас текенсен аллисем хăрђђăр“ тесе пĕтĕм тĕнђене илтĕнмелле кăшкăрђĕç. Çавăнпа Анклирипе Çовет Сойусĕнђи пролеттарисем пит тађă пĕрлешрĕç, Анклири трет-йунионсем темиçе мĕлйунлă ђленсем йанă телекатсисем пирĕн патшалăхра сотсиалисăм пурăнăçĕ мĕнле пулса пынине курма темиçе хут килсе кайрĕç, сотсиалисăм тăвас ĕç пирĕн патшалăхра çулсеренех малалла кайнине вĕсем темиçе хут та курђĕç.

1926-мĕш çулта Анклири çĕркăмрăк кăларакансен сапастовкки пуçлансан вĕсене пирĕн

профсойуссем шутсăрах пысăк пулăшу турĕç, çавăн хыççăн Анклирипе Совет Сойусĕнђи пролеттарисен пĕрлешĕвĕ тата ытларах çирĕпленђĕ. Анкли правиттĕлстви пирĕнпе ларутăру ĕçне пĕтерсен, Анклири çĕркăмрăк кăларакансене йертсе пыракан Кук акă мĕн каланă:

„Анкли правиттĕлстви Раççейе вăрçăпа тапăнсан, епĕ хамăр правиттĕлства хирĕç пулатăп. Пирĕн Раççейри йулташсене хамăр Полтуинран пахарах хумалла“ тенĕ.

Анклипе пирĕн патшалăх хушшинђи ларутăру ĕçĕ пĕтсен, Анклири рапођђисем хăйсен правиттĕлствине хирĕç тата ытларах хусканма пуçларĕç.

Миттĕнк хыççăн миттĕнк пулаť. Пур çĕрте те: „Совет Сойусне тапăнас текенсем пăђланђђăр! Кирлĕ мар пире вăрçă! Пурте Совет Сойусĕшĕн! тесе кăшкăраççĕ.

Анклипе Совет Сойусĕ пĕр пĕринђен сивĕнсен пĕрик кун иртсенех Парищре (Франтсире) рапођђисем, Совет Сойусне вăрçăпа тапăнасса хирĕç пулса, пит пысăк манифестатси тунă. Вăл манифестатсире пулнă 100.000 çын пурте пĕр сасăпа:

„Епĕр Совет Сойусне сыхлама хатĕр!"

„Епĕр Киттайри револютсишĕн çапăçакансене сыхлама хатĕр!"

„Епĕр пуршуаçи çĕнĕ вăрçă пуçартасса хирĕç тăма та хатĕр!"—тесе ресолютси йышăннă.

**Керманири хĕрлĕ фронтовиксем Совет Сойусне сыхлама хатĕр.**

Ĕлĕк тĕнче вăрçинче пулнă Керманири хĕрлĕ фронтовиксем те Перлин хулине темиçе çĕршер пинĕн пухăнса, Совет Сойусне тапăнакансене хирĕç тăма сăмах пачĕç. Вĕсен çумне Керманири комсомолĕссем те хутшăнса,—мĕн пурĕ 250.000 çынна çитсе—пурте вĕсем 1927-мĕш çулхи ийун, уйăхĕн 5-мĕш кунĕнче, Франтсирипе Чехословаккири фронттовиксен, тата комуниссен парттисен претставиттĕлсен умĕнче причак пачĕç.

Вĕсем аллисене тăратса акă мĕн каларĕç:

„Пĕтĕм тĕнчери империалисăм Совет Сойусне хирĕç вăрçа хатĕрленнине нихăçан та манас çук.

Пĕтĕм тĕнчери рапоччи класăн малашнехи илемлĕ пурнăçĕ Совет Сойусĕпе çыхăнса тă-

нине нихăçан та манас çук. Тĕнђе вăрçинђе рапођђи клас хĕн-хур курнине нихăçан та манас çук.

Пирĕнтен килекен револђутси ĕçне рапођђи класпа сотсиалисăмшăн пĕрмайах туса пыма хатĕр. Фронтра та, империалиссен çарĕсенђе те револђутсишĕн ĕçлеме хатĕр.

Совет Сойусĕшĕн Киттайри револђутсисемшĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешме хатĕр.

Совет Сойусĕшĕн тата пĕтĕм тĕнђипе револђутси тăвасшăн пĕр ђарăнмасăр, йалана кĕрешме хатĕр.

### Револђутсиллĕ Киттай пирĕн тăван.

Совет Сойусне пĕтĕм вăйпа сыхлас тесе Йевроппăри темиçе çĕршер пин рапођђисем приђак панă вăхăтра, çĕр çаврашкин тепĕр йенђе вĕсеннипе пĕр ĕçшĕн темиçе çĕршер пин çын йун йухтарса çапăçаççĕ. Епĕр кунта Киттайри хресђенсемпе рапођђисем çинђен калатпăр. Анкли Франтсипе, Йаппоњипе, Амерĕкпе пĕрле, Киттайри ђухăн хресђенсемпе рапођђисен револђутсине пĕр вăхăтра пĕтерсех лартас вĕçне çитнĕђђĕ. Анђах Киттайри револђутси хумĕсем халĕ Аслă Киттай çĕршывĕ талкăшĕпе сарăлнăçем сарăлса пыраççĕ.

Киттайри револ̧утси вăй илессе Совет Сойусĕпе пĕрле пĕтĕм тĕнђери ĕçхалăхĕ кĕтсе тăрат̆, мĕншĕн тесен унти влаç ĕçхалăхĕ аллине кĕни—пĕтĕм тĕнђери револ̧утси пулнине, Анкли патшалăхĕ пĕтессине пĕлтерет.

Киттай ĕçхалăхĕ те Совет Сойусĕнђи ĕçхалăхĕ пек сотсиалисăм çулĕпе кайас вăхăта çитĕ çитех.

**Пире пулăшакансем пĕтĕм тĕнђипех.**

Епир кунта ђи вăйлă патшалăхсенђи рапођђисемпе хресђенсем пире пулăшас тĕлĕшрен мĕнле хатĕрленни çинђен анђах каларăмăр. Вĕсем пире тăшмансенђен сыхлама темиçе çĕршер пинĕн сиксе тăма хатĕррине епĕр лайăх куртăмăр. Анђах ун пек револ̧утсиллĕ ушкăнсем — нумайăни, сахалăни — кашни патшалăхрах пур. Вĕсем те нихăш те вăрçăшăн мар, вăрçа хирĕç тăма Совет Сойусне сыхлама хатĕр. Анклипе ытти вăйлă патшалăхсем вăрçа мĕн ђухлĕ хытă хатĕрленĕç, çавăн ђухлех вăрçа хирĕç кĕрешӳ те кашни патшалăхрах вăйлăлансах пырĕ.

Комуниссен Инттернатсионалĕн Ĕç тăвакан Комиттеђĕ пур патшалăхсенђи комуниссен парттисене те пулас вăрçа хирĕç тăма

327/2

хатĕрленме хушнă. Вĕсем пулас вăрçа хирĕç тăма револђутсиллĕ рапођђисемпе хресђенсене те, пĕтĕм ĕçхалăхне те хатĕрлеççĕ.

Анђах пирĕн те пĕр минутлăха та тĕлĕрсе кайма йурамаст̆. Тăшмансем тапăнасса пирĕн те кĕтсе тăрса, хамăр çĕршыва сыхлама хатĕрленес пулат̆.

Пулас вăрçă çитсех перĕнсе ахăрса кайсан, халиђђен тĕнђе курман хĕнхур кăтартĕ. Анђах епĕр хамăр патшалăхри вăйпа, тăшмансем хушшинђи револђутсиллĕ пролеттариат вăйĕ çине шансах тăратпăр.

Çавăнпа та пĕтĕм шанђăкпа акă мĕн калама пултаратпăр:

*Совет Сойусне хирĕç кам та пулин вăрçă пуçласа йарсан, вăл Хĕрлĕ çарпа пĕтĕм тĕнђери пролеттариат хушшине лексе пăвăнса вилĕ.*



22762

# ТУПМАЛЛИ.


1. Кăпиталиссем вăрçа хатĕрленеççĕ . . . . 3
2. Тĕнђери пуршуаçи Совет Сойусне хирĕç тăмалли майсем шырать . . . . . . . . 7
3. Пирĕнпе йунашар патшалăхсем те вăрçа хатĕрленеççĕ. Анкли вĕсене пулăшать . . . 11
4. Токăвăрсем çинђен . . . . . . . . . . . 13
5. Пире хирĕç патшалăхсен вăрçă хатĕрĕсем ÿсни . . . . . . . . . . . . . . . 16
6. Полђшă вăрçа хатĕрленни . . . . . . . 18
7. Румыцђи çинђен . . . . . . . . . . 19
8. Финлђанти вăрçа хатĕрленни . . . . . . . 21
9. Палтти тинĕс хĕрринђи ытти патшалăхсем çинђен . . . . . . . . . . . . . . 23
10. Тăшмансем ытла вăйлах мар, епĕр те ытла нађарах мар . . . . . . . . . . . 26
11. Пирĕн Хĕрлĕ çар кирек хăçан та хатĕр . . 28
12. Совĕт Сойусĕн сывлăш флођĕ . . . . . 34
13. Пирĕн хими промышлĕннăçĕ . . . . . . . 40
14. Совет Сойусĕн тинĕс çинђи флођĕ . . . 41
15. Пирĕн çар промышлĕннăçĕ . . . . . . . 43
16. Хамăр çĕршыва сыхлас ĕçре Советсем, вырăнти тĕрлĕ орканисатсисем, тата ĕçхалăхĕ мĕн тума пултараççĕ . . . . . . . 46
17. Лашасĕм ĕрђетес ĕç . . . . . . . . 49

18. Ытти выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç . . . . . 51
19. Пулă тытас ĕç . . . . . . . . . . . . . 53
20. Сатпахђисем ĕрђетес, пахђа-çимĕç ўстерес ĕç . . . . . . . . . . . . . . . . 54
21. Çарансене лайăхлатас, утă нумайрах тăвас ĕç . . . . . . . . . . . . . . . . 56
22. Çулсене, кĕперсене çирĕплетес ĕç . . . . 57
23. Ђукунçулсемпе телефон йуписене сыхласси—халăх ĕçĕ . . . . . . . . . . . . 58
24. Пантитсемпе, шпионсемпе кĕрешес ĕç. . . 59
25. Пĕтĕм тĕнђери пролеттариат Совет Сойусĕ майлă . . . . . . . . . . . . . . . . 62
26. Франтси матросĕсем Отессăра пăлханса кайни . . . . . . . . . . . . . . . . 64
27. Пољшăри рапођђисемпе хресђенсем Хĕрлĕ çара мĕнле пулăшнă . . . . . . . . . . 66
28. Кермаңири рапођђисем Пољшăна илсе кайакан хĕçпăшала мĕнле ђарса тăнă . . . . 68
29. Анклири пирĕн тăвансем. . . . . . . . . 69
30. Кермаңири хĕрлĕ фронтовиксем Совет Сойусне сыхлама хатĕр . . . . . . . . . 71
31. Револђутсиллĕ Киттай—пирĕн тăван . . . 72
32. Пире пулăшакансем пĕтĕм тĕнђипех . . . 73

22762

9 МАР. 1930

ХАКНЕ ЙЎНЕТНӖ.

Йӳнетнӗ хакӗ 15 пус